# СУНТАЛ

## № 6



Фото Юрия Зайцева

# ШУРНАЛТА ПУРРИ:


*Стр.*

1. Ђăваш Автономи 8 çул тултарђĕ (статйа) . . . . . . . . . . 1.
2. **Патман**—Пĕтĕм Сойус. прол. писсат. 1-мĕш сйесĕ [статйа] 2.
3. **Ç. Шăпђăк**—„Октапĕр" пролет. писсаттĕл. шурналĕ [статйа] 5.
4. **Касакков К.**—Асăнтарăпха сана!.. [калав] . . . . . . . . 6.
5. **Н. Йанкас**—Хаярăкрах!.. [сăвă] . . . . . . . . . . . . . 9.
6. **Хумма Çеменĕ**—Тинĕс çинђе [ођђĕрк] . . . . . . . . . . .10.
7. **Çеçпĕл Мишши**—Çĕн Кун аки [сăвă] . . . . . . . . . . . .11.
8. Тĕрлĕрен ўкерђĕксем . . . . . . . . . . . . . . . . . . .12.
9. **Уйăп Мишши, Тумим Ил.** сăввисем . . . . . . . . . . . .14.
10. **С. Зорин**—Коркки револ̧ут. малтанхи çулĕсенђе (аса илни) 15.

*Стр.*

11. **Кели**—Поесси формисем çинђен (лит. шкулĕ) . . . . . . . .17.
12. **Л. Акаккăв, Йехрим Иванĕ**—Литхронĕккă . . . . . . . . .18.
13. **„Йал"** йатлă кино-фотто-карттинĕсем . . . . . . . . . . .19.
14. **Патман, Сав-й, Майак Йезкенĕ, Пав. Ишетер, Ң̧аман̧ђ, И. Тумилин, Н. Ротçен**—Йалавинăн „Литтераттурăлă саметкисем" пирки (криттĕккă) . . . . . . . . . . . . .20.
15. **С. Антрейĕв**—Кĕске хумпа ĕçлекен ратио [наукка статйи] 23.
16. **Антрей Петтокки**—Хула (футтурисла сăвă) . . . . . . . .24.
17. Тĕрлĕрен т. ыт. те . . . . . . . . . . . . . . . . . . çийĕсеђе.
18. **Тимухха Х., Солăттăв М.**—Аккатемĕк Н. Й. Марр—вилатăш.


## Ђăваш илемлĕ литтераттурĕн ăмăртăвĕ (конкурс).

Ђăвашсен Автономийĕ 10 çул тултарнă тĕле (1930 çул) Ђăваш Пролеттари Писсаттĕлĕсен «Канаш» сойусĕпе Наркомпрос çумĕнђи Актсентр Ђăваш илемлĕ литтераттурĕн ăмăртăвĕ (конкурс) туса иртерет. Ку конккурсăн тĕп сатађђи—Ђăваш Автономи пулнă ĕççене тĕплĕрех çутатса паракан произветенисем тăвасси, литтераттура тĕлĕшпе талантлă çамрăк писсаттĕлсемпе поетсене палăртса вĕсене хаваслантарасси.

### 1. Происветенисен тĕп теми:

Автономи ђăвашсене политтĕкпе хуçалăх йенђен, ăсхакăлĕпе йăлисене (быт) çĕнетес тĕлĕшпе мĕн-мĕн пани, 10 çул хушшинђи ўсĕм. Çак пысăк темăна пĕтĕмĕшпех, йе унăн уйрăм ыйтăвĕсене çутатса памалла.

### 2. Происветенисене мĕнле формăпа, тата мĕнле ђĕлхепе çырмалла?

1) Повĕçсем, калавсем, романсем; 2) поемăсем, сăвăллă ытти формăсем те; тата трамăллă происветенисем пулмалла. Çырасса ђăвашла çырмалла.

**Асăрхаттарни:** Конкурсĕн ытти йенĕсемпе сигелĕклĕ килĕшўллĕ, хакла пулсассăн, ытти ђĕлхепе çырнă происветенисем те ăмăртăва кĕме пултараççĕ.

### 3. Хăçан çырса памалла?

Происветенисене 1929-мĕш çулхи çенŤапĕрĕн 1-мĕшĕђђен çырса пĕтерсе, Шупашкара—Ăмăрту Комиççине памалла.

Çыракансем хушаматпа атрĕссене вăрттăн пакket ăшне хурса йараççĕ. Происветенисене пăхса тухса премиленĕ хыççăн çеç вĕсене Ăмăрту Комиççи уçса пăхаŤ.

Преми илнĕ происветенисем унщăн, премисĕр пуçне, тивĕçлĕ конорар памалла пиђетленеççĕ. Çырасса хутăн пĕр йенне, лайăхрах вуламалла çырас пулаŤ.

### Премисем:

Премилеме 2000 тенкĕ таран укçа пулаŤ. Пĕр 10 преми пама шухăш пур. Мĕнле-мĕнле преми пулассине тата Ăмăрту Комиççи (жюри) составĕ çинђен уйрăм пĕлтерĕпĕр.

**ЂППА „Канаш" Сойус Правленийĕ.**


## „СУНТАЛ"ăн

**„СУНТАЛ"а** — çитес №-рĕнђе — **ÇЫРĂНĂР!**

**Ђăваш кул̧ттурипе искусстви, унăн аваллăх пурлăхĕ çинђен ытларах çыратпăр. Халĕ ђăваш çĕршывне сăнаса вĕренекенсен сйесĕ. Ку сйеса паллă вĕреннĕ çынсем: профессăрсем: АФАНАÇЙĔВ (Мускавран), АШМАРИН, НИККОЛ̧СКИ Н. В., КОМИССАРĂВ К. И., Ленинкратра МАРР патĕнђе вĕренекенсем т. ыт. те килђĕç. Сйес ĕçĕсемпе те паллаштарма хатĕрленетпĕр.**

**Ђăваш йурри-сăввисен пахаллăхĕ, йĕркисем çинђен РОМАНĂВ Н. çырни пулаŤ. ХУММА ÇЕМЕНĔН „Тинĕс çинђе" ођђĕркĕн йулашки т. ыт. те пулаççĕ.**

**Хамăрăн пĕртен-пĕр илемлĕ шурнала çырăнмасăр йулар мар!**

ТĂВАТТĂМĔШ ÇУЛ ТУХАТ̆.

Пĕтĕм тĕнҗери пролеттарисем, пĕрлешĕр.

ХАКĔ:
1 уйăха — 20 пус
3 „ — 60 „
6 „ 1 т. 10 „
1 çула 2 т. —
Ретакси атрĕсĕ:
Чебоксары, Канашская ул., дом Совдепа № 15.
Телефон № 47.

# СУНТАЛ

Җăваш пролеттари писсаттĕлĕсен „Канаш“ сойусĕн литтературă, криттĕк, политтĕк тата науккă шурналĕ

„КАНАШ“ ХАÇАТ ÇУМĔНҖЕ УЙĂХРА ПĔРРЕ ТУХСА ТĂРАТ̆.

№ 6 (48)
ИЙУНҖ
1928.

# Җăваш автономийĕ 8 çул тултарҗĕ.

Епĕр, ĕлĕк асапра, нушара, хĕсĕкре пурăннă җăвашсем, хамăр автономи илсе ĕçлеме тытăннăранпа сакăр çул тултарнине асăнатпăр. Җăваш республĕкĕнҗе пурăнакан ĕçхалăхĕ: җăвашсем, вырăссем, тутарсем, тата ыттисем те пысăк хаваспах пайан, ийунĕн 24-мĕшĕнҗе, хамăрăн 8 çулхи утăмсене сăнама уйава тухатпăр.

Тĕнҗери мулхуçисем пĕртен-пĕр Совет республĕкне лапҗăтса пăрахас тесе кĕрешнĕ вăхăтра, ĕмĕртен асапра, тĕттĕмре пурăннă җăваш халăхĕ совет çĕрĕнҗе хăй ĕçне туса пыма уйрăм атминистратси тытăмĕ илҗĕ.

Раçĕн Çтаппанĕ вăхăтĕнҗе те ирĕклĕхшĕн кĕрешнĕ Вăтам Атăл çинҗи пăлхавçăсем, халĕ коммуниссен партти йертсе пынипе тĕреклĕ, тĕрĕс çул çине тăтăмăр.

Малтанах краштăн вăрçи, выçлăх тата ытти йăвăрлăх вăхăтĕнҗе ĕçе малалла йама питĕ хĕнҗĕ: савăтсем ĕçлемеççĕ, йалхуçалăхĕ җухăнланса җакса пырат̆...

Çапах аласене усмарăмăр. Җăвашсен автономийĕ 8 çул тултарнă çĕре республĕкре пурăнакан мĕн пур халăхсен килĕшӳллĕ органисатси туса хутăмăр. Җăваш республĕкĕн хуçи—мĕн пур ĕçхалăхĕ.

Җăваш ĕçхалăхĕ җĕрĕлнине, вăл куљттурлăхпа хуçалăх тĕлĕшĕнҗен хăпарнине мешҗенсен çĕрĕк кӳллинҗе пăнтăхса ларнисем çеç курма пултараймаççĕ. Йулашки кунсенҗе Шупашкара пухăннă Җăваш çĕршывне сăнаса пĕлес тĕлĕшпе ĕçлекенсен сйесĕ, җăвашсен пурнăçĕпе пур вĕреннĕ тĕнҗе те инттересленнине лайăх кăтартрĕ. Җăвашсен хуçалăхĕ, илемлĕ литтераттури, мусăкĕ, искуств хăпарни, вăл җăваш халăхĕшĕн çеç мар савăнăçлă, вăл ыттисемшĕн те савăнăçлă. Җăваш литтераттури мĕн пур тĕнҗери пиҗет выстăвккинҗе те (Керманин Кељнă хулинҗе) паларни пирĕн пиҗет те ытти халăхсемпе пĕрлех пысăк утăмсем тунине кăтартат̆. Хресҗенсен хаçаҗĕ „Пирĕн йал“ 20 пин ытла сарăлни җăваш халăхĕ җăнахах та куљттура тĕлĕшĕнҗен нумай ӳссе пынине лайăх кăтартат̆.

Хапрăк-савăт промышлĕннăçĕпе йалхуçалăх йенҗен те ӳсĕм пур. Епĕр 1917 çулта 525.211 кектар çĕр çинҗе ĕçленĕ пулсан, 1927 çулта 531.436 кектара çитиҗҗен ӳснĕ, тырă тухăçĕ те ӳсет, анҗах ку тĕлĕшпе вăрçăҗҗенхинҗен җылай кайра тăратпăрха.

Йулашки çулсенҗе тĕрлĕ копперативсем, пĕрлешӳсем, йулташлăхсем ӳсеççĕ. Җăвашсен йалхуçалăхне хăпартасси пĕрлешӳллĕ хуçалăх урлă çеç пулма пултарат̆. Йалхуçалăх копперативĕ ĕçхалăхне 17,5% пĕрлештернĕ, кустарсен копперативĕ—14,6%, тата потрепиттĕл копператсийĕ йалта 26.310 çынна (18% ытларах), хулара 8.150 çынна (63,9%) пĕрлештерсе тăраççĕ.

Халăха вĕрентес ĕç тĕлĕшпе патша вăхăтĕнҗе кашни çын пуçне 47 пус тивнĕ пулсан, халĕ 1927 çулта 3 т. те 28 пуса йахăн ку ĕçе паратпăр, тата çитĕннисене вĕрентме 4 тенкĕ те 32 пус тухат̆. Шкула кайма тивĕç аҗасенҗен 60% (çурри ытла) шкулсенҗе вĕренеççĕ. Аслă шкулсенҗе тĕрлĕ ăсталăхпа вĕренекен те җылай. Çитес 3—4 çул хушшинҗе пирĕн хушăмăрта хут пĕлменни паҗах пулмалла мар.

Совет ĕçне тăвас çĕрте те пысăк утăмсем пур. Уйессем вырăнне 17 район туни — епĕр совет аппаратне ĕçхалăхĕпе таҗăрах çыхăнтарасшăн тăрăшнине кăтартат̆. Анҗах çитменлĕхсем, йĕркесĕрлĕхсем те тем җухлех. Вĕсене, ĕçхалăхĕн витĕр куçĕ пулăшнипе, хĕртсе, калитлесе пĕтерсе пымалла. Совет ĕçне йалта җухăнсемпе вăтам хресҗенсем туса пыраççĕ. Хăш-хăш çĕрте кулаксем те совет аппаратне кĕрсе çĕртсе пурăннисем пур, вĕсене нумайах пурнăç пулас çук. Җăваш хĕрарăмĕ, нихçан та патшалăх ĕçĕсене хутшăнманскер, халĕ ăна майĕпе вĕренсех пырат̆. Йалсоветҗĕсенҗе халĕ 9.000 хĕрарăма йахăн ĕçлет. Ĕç тĕлĕшĕнҗен вĕсем, ĕçе хутшăннисем, арçынсенҗен кайах йулмаççĕ.

Кăçалхи çул Җăваш республĕкне сăнаса тухма Мускавран комиççисем килҗĕç. Җăваш промышлĕннăçне, йалхуçалăхне пулăшас майпа җылай укçа параççĕ. Çак çулсенҗех çĕнĕ савăтсем ĕçлеме тытăнмалла. Çĕмĕрлĕри компинат, Канашран Шупашкара җукунçул хурасси, çĕре, вăрмана тĕплĕ йĕркелесе тухасси, т. ыт. пысăк ĕç умра. Кусемсĕр пуçне—хамăр җĕлхепе ĕçлеме вĕренесси, кĕнеке-хаçат кăларас ĕçе лайăхлатасси, тата çавăн пек хаклă ĕçсем пур.

Ку сатаҗсене укçа-тенке тирпейлĕ тыткаласа, ăна пĕлсе, кирлĕ çĕре, усăллă вырăна йарса ĕçлесен çеç тума пулат̆. Çак тĕлĕшрен җăтмалла мар ирсĕрлĕхсем пур. Акă нумай пулмаст̆ туса пĕтернĕ—«Хресҗен çурҗĕ» çунса кайрĕ. Кунта пирĕн хăш-пĕр пуçлăхсем айăпли, вĕсем халăхран татăлса тăни, ĕçе вăхăтра туманни паларҗĕ. Малашне çакăн пек çитменлĕхсене пĕр-пĕрин ĕçне тишкерсе, пирĕн уҗрештенисен ĕçне мĕн пур ĕçхалăхĕ çывăх астуса тăрсан çеç пĕтерме пулат̆. Пирĕн 8 çул хушшинҗи утăмсем—çакна тума мĕн пур ĕçхалăхне җĕнеççĕ.

**Җăваш ĕçхалăхĕн хуçалăхпе куљттурĕн ӳсĕм тĕрекĕ—**
**ҖĂВАШ РЕСПУПЛĔКĔ СЫВĂ ПУЛТĂР!**

# Пӗтӗм Сойусри пролеттари писсатӗлӗсен I-мӗш сиесӗ.

Сиес апрелӗн 30-мӗшӗнҭе пуҫланса майӑн 8-мӗшӗнҭе каҫхине пӗтрӗ. 8 кун хушшинҭе сиес питӗ пысӑк ыйтусене тапратса, вӗсем тӑрӑх питӗ кирлӗ кӑтартусем парса хӑварҭӗ. Сиес умӗнҭи ыйтусем ҭӑнах та пысӑк ыйтусем пулма тивӗҫлӗ пулҭӗҫ, мӗншӗн тесен вӗсем пӗтӗм Совет Сойусӗн сотсиалисӑм тӑвас ӗҫрен тухса тӑракан куӆттурӑ револутси ыйтӑвӗпе таҭӑ ҫыхӑнса тӑҭӗҫ. Ҫыхӑнса тӑма кана мар, сиес куӆттурӑ револутсин пӗр пысӑк пайне, литтераттурӑ ӗҫне, ҫӗнӗ условисенҭе мӗнле малалла йарасси ҫинҭен сӳтсе йаврӗ. Сиес йышӑннисемпе кӑтартса хӑварнисем те хаҭхи вӑхӑтра пур йенҭен те пархатарлӑ пулмалла, мӗншӗн тесен пӗр йенҭен пролеттари писсаттӗлӗсен орканисатси кунран кун ӳссе пынӑ ҭух, тата пролеттари писсаттӗлӗсем хайсем те творҭҭӗствӑ тӗлӗшӗнҭен ҫирӗпленсе пынӑ вӑхӑтра пирӗн хамӑран малашнехи ҫула, хамӑрӑн ӗҫе хӑш йенне тата мӗнле майпа йарассине тӗллесе хуни пирӗншӗн пахаран та паха пулма тивӗҫлӗ. Сиес нумай ыйтусем сӳтсе йаврӗ, нумай кӑтартусем парса хӑварҭӗ. Вӗсенҭен ҭи паллӑраххисем паллах, орканисатсиллӗ ыйтусемпе творҭҭӗствӑ ыйтӑвӗсем. Курттӑмӑн каласан, сиесӑн тӗп шӑнӑрӗсем ҫавсем пулҭӗҫ.

**Орканисатси** ыйтуне сиес икӗ йенҭен пӑхса сӳтсе йаврӗ: пӗрп—хамӑр ВАПП ӗреҭӗсене тата лайӑхрах ҫирӗплетесси, тепри—хамӑрпа ҫуммӑн пыракан пролеттари писсаттӗлсен пӗрлешӳсене хамӑрпа ҫыхӑнтарасси, вӗсене ВАПП орканисатсине кӗртесси. Кунпа пӗрлех тата сиес пролеттари писсаттӗлӗсем маррисене те, Совет литтераттурӗшӗн усӑллӑраххисене, сулахай попутҭӗксене, пролеттари литтераттурӗ ҫулӗ ҫине тӑратассине манса хӑвармарӗ.

ВАПП орканисатсийӗ пӗрмайах йышланса пыраҭ. Совет ҫӗршывӗнҭи мӗн пур писсаттӗлсен орканисатсисенҭен ҭи пысӑкки, ҭи вӑйли вӑл—ВАПП орканисатсийӗ. Йыш йенҭен пӑхсан, орканисатси ӳснине ҫак ҭыхвӑрсем кӑтартаҫҫӗ:

1926-мӗш ҫулта ВАПП-ра 2832,
1927-мӗш ҫулта „ 3407,
1928-мӗш ҫулта „ 4300 ҭлен.

Йулашки ҭыхвӑр вырӑнсенҭи телекатсем сиеса ҫитсен тата улшӑнҭӗ. Ҭылай телекатсем ВАПП Правленийӗ кӑтартакан ҭыхвӑрпа килӗшмеҫҫӗ, — ҭӑннипе вырӑнти орканисатсисенҭе ҭленсен шуҭӗ тата ытларах, теҫҫӗ.

Тепӗр йенҭен ВАПП авторитеҭӗ вырӑс писсаттӗлӗсем хушшинҭе кӑна мар, вакхалӑхсем, куӆттурӑ тӗлӗшӗнҭен кайа йулнӑ халӑхсем хушшинҭе те питӗ ӳссе пыраҭ. Хаҭхи вӑхӑтра ВАПП 30 халӑх хушшине кӗрсе вырнаҫнӑ. Паллах, кун пек ҭыхвӑрпа нихӑш писсаттӗлсен орканисатсийӗ те мухтанма пултараймасҭ.

**ВАПП сиесӗнҭи ҭаваш телекатсем**



**Лараканнисем** (сулахайран): **Патман** (Н. Кириллӑв), **Ҫерафимовиҭ** (вырӑссен паллӑ писсаттӗлӗ), **Ҫмирнов-Уӆйанӑвски** (Улатӑртан), **Танилӑв** (Хусантан).
**Тӑраканнисем** (сулахайран): **Шӑпҭӑк** (С. Толмассӑв), **Сквортсов** (Канашран), **Н. Ф. Танилӑв.**

Кунсӑр пуҫне тата ВАПП йут патшалӑхсенҭи пролеттари писсаттӗлӗсем хушшинҭе те паллӑ орканисатси йатне йышӑнса тӑраҭ. Ун ҫинҭен сиеса йут патшалӑхри писсаттӗлсенҭен килнӗ телекрафлӑ саламсем те лайӑх каласа параҫҫӗ. Вӗсенҭен ҫаксене асӑнма тивӗҫлӗ: Анри Парпӳс, Тийеко Ривера, Панаит Истрати тата ыттисем те.

Орканисатси ҫирӗплӗхӗ унӑн никӗсӗ ҫирӗппинҭен килет. ВАПП орканисатси айӗнҭе выртакан никӗс, пӗрлештерекен принтсӗп пӗрре те ытти орканисатсисен никӗсӗсем пек мар. Ытти орканисатсисем пуринҭен ытла вӑхӑтлӑха пулма пултаракан принтсӗпсемпе анҭах ҫыхӑнса тӑраҫҫӗ, калӑпӑр: пӗр писсаттӗлпе тепри ҫывӑх йе тус пулса пурӑннипе (тӗрлӗ попутҭӗксем), формӑ тӗлӗшӗнҭен пӗр майлӑ шухӑшланипе (Леф), йе тата урӑх йӗркепе (Перевал) т. ыт. те—пӗр сӑмахпа каласан вӗсем пурте пайан кунхи сӑлтавсемпе анҭах ҫыхӑнса тӑраҫҫӗ. Паллах, пайан кунхи сӑлтавсем ыран паҭах улшӑнма пултараҫҫӗ. Ҫавӑнпа та ытти орканисатсисен пурнӑҫӗ тӗреклех мар, тӗреклӗ пулма та пултараймасҭ.

ВАПП хӑй ӗретне пролеттари писсаттӗлӗсене клас принтсӗппе пуҫтараҭ. ВАПП ӗретнех «тӗнҭе ҫине пролеттари куҫӗпе пӑхакан» хресҭен писсаттӗлӗсем те кӗреҫҫӗ. Ку тӗлӗшрен ВАПП пролеттарипе хресҭене пӗр пысӑк ӗҫре пӗрлештерсе пыраҭ. Вӑл ӗҫ - — сотсиалисӑм тунӑ ҫӗрте парттипе Совет влаҫне пулӑшса пырасси. Каламасан та паллӑ—ку принтсӗп ҫӳлте асӑннӑ принтсӗпсемпе танлаштарсан ҭи шанҭӑклӑ, ҭи вӑрӑма пымалла принтсӗп.

Анҭах, апла пулсан ВАПП ӗретӗнҭе ӗҫсем типтикӗс, тӗрӗстӗкел пыраҫҫӗ, тесе никам та ан шухӑшлатӑр. ВАПП ӗретӗнҭе те хирӗҫӳсем пулкалаҫҫӗ. Хӑш ҭухне вӗсем ҭылайах ҫивӗҭленсе кайаҫҫӗ. Урӑхла пулма та пултараймасҭ, мӗншӗн тесен епӗр хамӑр ҫине илнӗ ӗҫ пит пысӑк, пит йӑвӑр, ӑна пӗр йанӑшсӑр, пӗр пӑрӑнҭӑксӑр туса пыма хӗн.

ВАПП хушшинҭи хирӗҫӳсем пуринҭен ытла орканисатси ыйтӑвӗсенҭен тухса пыраҫҫӗ. ВАПП—пӗр йенҭен масаллӑ орканисатси, тепӗр йенҭен темократтиллӗ ҭентралисӑмран тухса тӑракан тистсиплинӑллӑ орканисатси. Ҫавӑнпа ҫак елементсене йуратман ҫынсем унпа килӗшсех каймаҫҫӗ. Ун пек кӑмӑлсӑрсем хӑш ҭухне орканисатси ӑшӗнҭех тупӑнкалаҫҫӗ. „Тсемӗнт“ автӑрне Клаткова пурте пӗлетпӗр. Вӑл ВАПП-ра авал ӗҫлеҭҭӗ, анҭах ҫак ҫӳлте асӑннӑ елементсене ҭатса пурӑнаймарӗ те ВАПП-ран тухса кайрӗ. Сиес пуҫтарӑнас умӗн тата ВАПП ҭленӗ пулнӑскер (ВАПП-ран кӑларса сирпӗтнӗшӗн ҫиленсе пулас) Соколов А. „Читатель и Писатель“ хаҫат хӗтӗртсе пынипе ВАПП-а ҭылайах мута-

ђӗрех пулмалла пек туйӑнаҫ. Анђах тӗрӗссипе аплах мар. Апла пулни вӑл фотокрафи ӳкернӗ пек анђах пулаҫ. Фотокрафи ђӑн хутошӗствӑран уйрӑмми кирек кама та паллӑ. Ђӑн ђӑн хутошӗствӑ, искусствӑ ҫын сӑнсапатне ӳкерсе хӑварнипе анђах ђарӑнса тӑма пултараймасҫ, унӑн сатађӗсем вӑл ӗҫрен ђылай малта тӑраҫҫӗ.

---

## ЂАПП Правлени ђленӗ литкрушоксенђе



**Ваҫанкка (Шаланкка)** ЂАПП Правлени ђленӗ Ишекри литкрушокра Ђӑваш лит. ҫинђен токлат тунӑ хыҫҫӑн хӑй сӑввисене вулаҫ

---

Илӗпӗр Кокаԓӑн типӗсене: Нострӗв, Коропӑђкӑ йе Плӳшкӗн. Епӗр ун пек помешђӗксене ђылайӗшӗ курман та, курма та пултарайман. Ҫапах та Кокаԓӑн „Мертвые души“ повӗҫне вуланӑ ђух Нострӗвӗ те, Коропӑђкӑ та, Пԓушкӗнӗ те 100 ҫул ӗлӗк йепле пулнӑ, халӗ те пирӗн куҫ умне ҫаплах пырса тӑраҫҫӗ. Ҫавӑн пекех тата Толстойӑн керойӗсем те хаԓхи вӑхӑтра хӑйсен тӗсне те, йатне те ҫухатнӑ пулсан та, Толстой происветенисене вуланӑ ђух пирӗн ума ҫӗнӗрен ђӗррӗн пыра пыра тӑраҫҫӗ. Шекҫпир происветенисем XVII ӗмӗрте ҫырнӑ происветенисем. XVII ӗмӗрте куԓттурӑ та наукӑ та хаԓхинђен танлаштармалла мар кайра пулнӑ. Етем пурнӑҫӗн саккунӗсене пӗлесси, ҫынна хӑйне те тӗрлӗ йенђен тӗпђесе пӗлесси пулман теме те пулаҫ вӑл вӑхӑтра. Ҫитменнине тата литтераттурӑ ыйтӑвӗсене хаԓхи пек наукӑ кӑтартӑвӗсемпе татса пани те пулман. Анђах, ҫапах та, Оттеллӑ, Камлет автӑрӗ, литтераттурӑ ыйтӑвӗсене тен хаԓхи тепӗр школԓникран наԓартарах пӗлнӗ пулсан та, хаԓ те, 300 ҫул иртсен, пирӗншӗн ђӗрӗ ҫынна кӑтартас тӗлӗшрен питӗ пысӑк кӗлетке пулса тӑраҫ. Мӗншӗн? Мӗншӗн тесен Шекҫпир та, Кокаԓ та, Толстой та тата ытти класҫӗксем те хӑйсен керойӗсене ҫук йапаларан шухӑшласа кӑларса мар, хӑйсем пурӑнакан самнари ҫыннӑн типлӑ штрихӗсене пӗр пӗрипе килӗштерсе ҫыпӑҫтарса пӗр опрӑс тунӑ. Ҫавӑнпа та вӗсен керойӗсем пӗр уйрӑм Нострӗв, Коропӑђкӑ, Оттеллӑ кӑна мар, вӗсем Нострӗвсем, Коропӑђкӑсем, Оттеллӑсем.

Карл Маркс калаҫ: ҫын, ҫут тӗнђепе кӗрешсе, хӑйӗн приротине те улӑшраҫ, тет. Вӑл ђӑн—авалхи ҫынпа хаԓхи ҫынна танлаштарма ҫук. Хаԓхи ҫын фиҫиолоки тӗлӗшӗнђен те авалхи ҫынран уйрӑм. Итеолоки, пҫихолоки йенђен илсен уйрӑмлӑхӗ тата та нумайрах. Ҫын улшӑнаҫ. Анђах ку улшӑнӑву пӗрре те мехханиккӑ саккунӗсемпе пулса пымасҫ, калӑпӑр, машшинӑра пӗр урапи ҫаврӑнсан тепӗр урапи те хӑйне тивӗҫлӗ ҫаврӑну туса илнӗ пек. Кунти саккунсем ђылай урлӑ-пирлӗ ҫыхӑнса тӑракан саккунсем. Ҫавӑнпа та, тӗплӗрех пӑхсан, кашни епохӑрах епӗр етемлӗхӗн йе пӗр йе тепӗр йенӗ ҫийеле тухса хӑват илнине куратпӑр. Калӑпӑр, вӑтам ӗмӗрсем пуҫламӑшӗнђе рытсӑрлӑх, ҫӗнӗ вӑхӑтсенђе романтисӑм, револютси хумӗ хӑпарса пынӑ вӑхӑтра револютсиллӗ хастарлӑх. Пӗр сӑмахпа каласан, кашни самана хӑйне тивӗҫлӗ ҫынна мала кӑлараҫ.

Ҫӳлте асӑннӑ класҫӗксем ҫак хӑйсен вӑхӑтӗнђи саманана тивӗҫлӗ ђӗрӗ ҫынна кӑтартма пултарнӑран ӗнтӗ пирӗншӗн класҫӗксем пулса тӑраҫҫӗ. Вӗсен происветенийӗсем, урӑхла каласан, хутошӗствӑллӑ историсем. Ҫав историйе вуланӑ ђух епӗр происветенире ӳкӗнсе йулнӑ саманари пурнӑҫа хамӑр пурӑннӑ вӑхӑтри пурнӑҫа курса тӑнӑ пек куратпӑр. Ҫавӑнпа та ҫавӑн пек хутошӗствӑллӑ происветенисем ҫырма пултарнӑ писсаттӗлсене епӗр класҫӗксем тетпӗр.

Пролеттари писсаттӗлсем класҫӗксем ҫине мӗнле пӑхни ҫакӑнтан паллӑ пулмалла. Класҫӗксене епӗр йышӑнатпӑр, вӗсем умӗнђе епӗр пуҫа та тайатпӑр, анђах пур йенђен те вӗсем хыҫҫӑн пыма сӑмах памастпӑр. Пролеттари литтераттурӗн сотершанийӗ хӑйӗн. Форми те унӑн саманана килӗшекен хӑйӗн форми пулмалла. Лунађарски йулташ сӗесра тӗрӗс каларӗ: епӗр, терӗ вӑл, сотершани йенђен никама та пуҫҫапма каймастпӑр, мӗншӗн тесен опђӗствӑ пурнӑҫӗнђи йавленисене тӗрӗс ӑнланас тӗлӗшпе епӗр хаԓхи вӑхӑтра пуринђен те тӗреклӗрех тӑратпӑр, анђах формӑ тӗлӗшӗнђен, технӗккӑ йенђен пирӗн ӑнланса ҫитерейменнисем ђылайха, терӗ. Ку ђӑнах та пысӑк ҫитменлӗх, мӗншӗн тесен, кирек кама та паллӑ: лайӑх сотершанине лайӑх формӑ памасан происветени хӑй хакне ҫухатма пултаратех.

Ҫаксене аса илсе пролеттари литттраттурӗ хӑй умне пысӑк сатаԓ лартрӗ, вӑл—лайӑх, килӗшӳллӗ формӑ



**Ишекри фискуԓттурнӗксем вӑййӑра.**

---

тупасси, ђи малтан ӗлӗкхи литтераттурӑран йулнӑ паха формӑсене хамӑра парӑнтарасси. Паха формӑсем паллах, вӗсем класҫӗксен происветенисенђе. Пирӗн класҫӗксенђен вӗренмелле. Пӗтӗм тӗнђери литтераттурӑна сӑнаса пынӑ вӑхӑтрах пирӗн вырӑс творенӗсен литтерат-

турӗ çитсе ларнӑ картри пахалӑхсене те тишкӗрсе хамӑр алла çавӑрса илмелле, вӗсемпе усӑ курмалла.

Анҫах мӗнле çавӑрса илмелле?

Тӗпҫесе, криттӗклесе.

Ленин пуршуаçи куҫттурине хамӑр алла çавӑрса илес тесе каланӑ ҫух, нихӑçан та вӑл куҫттурӑна йепле пулнӑ çаплах пролеттари çӗрӗ çине кӳçарса лартас тесе шухӑшламан. Вӑл пуршуаçи куҫттурӗн çитӗнӗвӗсене илсе вӗсене хамӑр умра тӑракан сатаҫсем майлӑ çавӑрса тытса усӑ курмалла тенӗ. Çавӑн пекех литтераттурӑ та. Пирӗн сатаҫ—пуршуаçи литтераттурӗн çитӗнӗвӗсене вӗренсе, вӗсене тата хӑватлантарса пырса çӗнӗ керой, çӳлелле хӑпаракан клас претставиттӗлне, коллектив ҫленне, пурнӑçри, классен кӗрешӗвӗнҫи мӗн пур хирӗçӳсем витӗр çапӑçса тухакан çинтӗслӑ опрӑс парасси. Çак сатаҫ пирӗн хаҫхи вӑхӑтра тӗп сатаӗ пулса тӑраӗ. Ытти сатаҫсем пирӗн çак тӗп сатаҫран тухса тӑраççӗ. Çавӑнпа ӗнтӗ епӗр хамӑр умма ҫӑн малтан класçӗксенҫен вӗренес ӗçе пырса тӑрататпӑр. Творҫӗствӑ ыйтӑвӗсене сӗес çакӑн майлӑ пӑхса сӳтсе-йаврӗ.

Орканисатси ыйтупе творҫӗствӑ ыйтӑвӗсемсӗр пуçне сӗес ытти ыйтусене те тапратса сӳтсе-йаврӗ. Анҫах вӗсене пурне те асӑпса пӗтерме пӗҫӗк статйара май çук. Пирӗн шухӑшпа вӗсем Ҫаваш ассотсиатсинҫкулленхи ӗçӗнҫе палӑрса, ӗçе кӗрсе пырӗç. Кунта çакна анҫах калас килет: Совет Сойусӗнҫи пролеттари класӗ политтӗккӑпа хуçайства вунпӗрӗмӗш çул тытса тӑнӑ вӑхӑтрах пӗтӗм тӗнҫе умӗнҫе куҫттурӑпа искусствӑна та хӑй аллине тӗреклӗ çавӑрса илме пултарнине куллен кун кӑтартса пыраӗ. Сӗес Совет Сойусӗнҫи куҫттурӑ ӗçне тӑвакансен пӗр пайӗн темонстратсийӗ пулҫӗ. Çак темонстратси пролеттари писсаттӗлӗсем, хӑйсен йаҫӗпе кӑна мар, ӗçӗпе те Совет литтераттурӗнҫе пуç пулса тӑма тивӗçлине лайӑхах кӑтартрӗ. Апла пулсан пирӗн малалла тата хӑйуллӑрах çак тивӗçлӗхе çирӗплетме тӑрӑшмалла.

**Патман.**

# „Октапӗр“ пролеттари писсаттӗлӗсен шурналӗ.

«Октапӗр» вӑл вырӑсла тухса тӑракан илемлӗ литтераттурӑпа политтӗк шурналӗ. Ӑна пӗтӗм Совет Сойусӗнҫи Пролеттариллӗ Писсаттӗлсен Сойусӗпе Мускаври Пролеттариллӗ Писсаттӗлсен Сойусӗ пӗрлешсе кӑлараççӗ. „Октапӗр“ кашни уйӑхра пӗрре тухса тӑракан шурнал. Вӑл ҫылайраҫпа тухса тӑраӗ, 1924-мӗш çул тухма пуçланӑ. «Октапӗр» шурнал—шурнал шутӗнҫе тухса тӑраӗ пулин те, ӑна шурнал тесе кӑна каламалла мар, ӑна кӗнеке тесех те калама йураӗ, кӗнекех темелле пулаӗ. Шурнал тесе епӗр, «Октапӗр» шурнал пек харпӑр хӑй вӑхӑтӗнҫе тухса тӑракан шурналсене калатпӑр, анҫах вӗсен хулӑмӑшне илсен—никӑшин те 40—60 стр. иртнр çук. „Октапӗр“ шурналӑн хулӑмӑшӗ те вӑтам илемлӗ кӗнеке хулӑмӑшех—250 страниатсӑна йахӑн ситет.

Хак йенҫен пӑхсан та—ытти, ахаҫ кӑларакан кӗнекесен хакӗсем пирӗн хаклӑрах туйӑнаççӗ. «Октапӗр» пысӑкӑш кӗнекене илес пулсан, сахалтан та вӑл 2 тенкӗ, икӗ тенкӗ çурӑ тӑраӗ, «Октапӗр» мӗн пурӗ те 1 тенкӗ те 40 пус кӑна тӑраӗ. Çулталӑклӑха çырӑнса илекенсене вӑл кашни кӗнеки пӗр тенкӗ тӑраӗ. Мӗншӗн тесен, çулталӑка пурӗ 12 тенкӗ кӑна тӑраӗ, çулталӑкра 12 кӗнеке тухаӗ. Çапла вара, çулталӑклӑха çырӑнса илекенсене 4 тенкӗ те 80 пус çӑмӑллӑх пулаӗ.

«Октапӗр» шурнала кам кӑларнине, унӑн пысӑкӑшне, хакне пӑхоа тухрӑмӑр. Кӑна епӗр шурналӑн тулашӗ тейӗпӗр. Шурнала витӗртерех пӗлес тесен, шал йенне те, унӑн ӑшҫиккине те пӑхас пулаӗ. Анҫах кунта епӗр, шурналти кашни уйрӑм происветенисене илсе пӑхма пултараймастпӑр. Мӗншӗн тесен, шурнала пирӗн Ҫаваш риспуплӗкӗ те пӗр 2—3 №-тен ытла илмеççӗ пулмалла, тетӗп. Илсе тӑнине никамах та пӗлместӗп, пӗр Шупашкарти йулташсенҫен кӑна пӗр икӗ çын илсе тӑраççӗ. Шурналти уйрӑм происветенисене илсе тишкерсе тухма çавӑнпа та усӑ сахалтарах пулӗ тетӗп. Тишкерес пулсан, масӑллӑ цлоисветенисене, массӑ хушшине сарӑлнӑ происветенисене тишкерсен лайӑхрах пулаӗ. «Октапӗр» шурнал пирӗн ҫаваш масси хушшине сарӑлса çитеймен шурнал. Сарӑлса çитме мар, нумайӑшӗ ӑна ҫаваш писсаттӗлсемпе поетӗсем те пӗлменнисем те пур. Çак йенҫен пӑхсан та, „Октапӗр“ шурналӑн уйрӑм происветенисене хамӑр ҫаваш пиҫетӗнҫе тишкерсе тухни кирлех те мар пек туйӑнаӗ. Тишкерни усӑллӑ пултӑр тесен, ӑна вырӑсла, вырӑсла шурналсем ваҫҫи тишкерес пулаӗ. Анҫах, çак сӑмахсемпе епӗ шурнал çинҫен нимӗр каламасӑрах хӑварас теместӗп, шурналӑн пӗтӗм пултаруллӑхӗ çинҫен калас тетӗп. Ку пирӗншӗн кирлӗ йапала пек туйӑнаӗ. Анҫах ун çинҫен те вӑрӑм мар, пӗрик сӑмах çеç: „Октапӗр“ шурнал сӑмах çавӑрӑнӑçе тӗлӗшӗнҫен те, йумахӑн илемлӗхӗ тӗлӗшӗнҫен те, итеолӗки тӗлӗшӗнҫен те питӗ те пиçсе çитнӗ шурнал. Хӑш-пӗр шурналӑн происветенисене вуласа та тухма пултараймастӑп, ывӑнтараӗ, уна пӑрахса урӑх йапала вулас килтерет. «Октапӗр» шурналти происветенисем сана хӑпа ыталаса илеççӗ, санӑн тутусене ҫуптусах ӗмеççӗ, савӑнса çеç ларатӑн, такам аллинҫе, таçта. Анҫах ху мӗн çинҫен вуланине витӗр пӗлетӗн, есӗ кирек мӗн çинҫен вулатӑç пулсан, есӗ ӑна вуламастӑн—ху куçупах куратӑн, çав йапалапа есӗ ху та çыхӑнса тӑратӑн.

Происветенисем пӗр пек мар: вӑрӑммисем те пур, кӗскереххисем те пур. Анҫах, вӑрӑмраххисем те хӑйсен илемлӗхне парса, пӗртте вӑрӑмӑн курӑнмаççӗ. Хӑш-пӗр происветенисем, пӗр №-ре кӗреймен пирки, икӗ №-ре çапӑнни те пур («Лесозавод» А. Караваева). Çавӑн пек икӗ №-ре çапӑнни те нимӗн те мар, анҫах ҫасрах вӗçне тухса ӗçӗ мӗнле пӗтнипе питӗ пӗлес килтерет, кӗттерет.

„Октапӗр“ шурнал — массӑллӑ шурнал, вӑл пӗтӗм ӗçхалӑхне, пӗтӗм пролеттариллӗ писсаттӗлсемпе поетсене йертсе, çыхӑнтарса, хӑй çумне йышӑнса, вӗрентсе пыракар шурнал. Вӑл вӑрӑмрах происветенисене уйрӑмӑн кӗнеке кӑларса, кӗскерехисене, массӑран пыракан происветенисемпе тултарма тӑрӑшӗ.

„Октапӗр“ шурналӑн пӗр çитменлӗхӗ пур—ку ӳкерҫӗксем çукки. Малашне ӳкерҫӗксемпе кӑларса тӑмалла тӑвасҫӗ.

Пӗр сӑмахпа каласан—„Октапӗр“ ҫӑн пролеттариллӗ илемлӗ литтераттурӑ шурналӗ. Вӑл ҫӑнахах пролеттари пурнӑçӗпе çыхӑнса тӑрса, пролеттариллӗ писсаттӗлсемпе поетсене çул кӑтартса пыракан шурнал.

**Ç. Шӑпҫӑк.**

# Асӑнтарӑпха сана!..

## К. КАСАККОВ калавӗ.

*(Йулашки)*

* * *

Хӗвел сӑрт урлӑ вӑрттӑн пӑхса кулат̆. Вӑл ҫӗртме курӑкӗ ҫинђе, ашшӗсене йе пиђђӗшӗсене сухаран килессе кӗтсе выђаса ҫӳрекен ађасене ыран ирпе тепре хӑй курӑниђђен сывӑ пурӑнма халаллат̆. Симӗс курӑклӑ «Лаҫвар» улӑхӗ тавралли сӑрт ҫинђе ӳсекен ватӑ йӑвӑҫҫен тӑррисем, каҫхи хӗвел ҫуттипе, савӑнаҫҫӗ. Вӗсем хӗвел ҫуттинђен уйӑрласшӑн мар: «Акӑ халех хӗвел пытанат̆, вӑл пытаниђђен унӑн ҫуттипе кӑмӑлланса йулар», тесе кӑштӑртатса калаҫаҫҫӗ.

Сӑрт хӗрринђи улма йӑвӑҫҫи айӗнђе суха тӑвакансем патне апатпа килнӗ икӗ хӗрарӑм йумахласа лараҫҫӗ. Вӗт-шакӑр ађасем хӑйсен ашшӗсем сухаран ђас килменнипе киђемленнӗ пулмалла. Вӗсем симӗс курӑк ҫинђе ђике мӑйрилле выђаҫҫӗ. Хӑшӗ пӗрисем улӑх тӑрӑх умлӑ-хыҫлӑн аллисемпе хӑйсен ђӗркуҫҫийӗсем ҫине уртӑнса, пуҫӗсене усса тӑнӑ. Теприсем ђупа-ђупа пырса, вӗсем урлӑ сикеҫҫӗ те, пуринђен мала кайса каллах ҫавнашкал тӑраҫҫӗ. Ҫапла выђаса улӑх тӑрӑх малалла кайаҫҫӗ. Унта вӗсем тем те пӗр хӑтланаҫҫӗ. Хӑйсен шӑмшакӗсене тем тӗрлӗ аваҫҫӗ. Хӑшӗсем, стайлӑ сикеймесӗр, тӑраканнисен пуҫӗсем урлӑ сирпӗне, сирпӗне кайаҫҫӗ. Теприсем, сикекеннисем йӑвӑр пирки, вӗсене йатаймасӑр хуҫлана, хуҫлана анаҫҫӗ. Акӑ пӗр ҫӑмӑл шӑмшаклӑ, хӗрлӗ кӗпеллӗ ађа, кӑвак кӗпелли урлӑ вӑшлаттарса сикрӗ. Сикнӗ вӑхӑтра, асӑрхамасӑр, кӑвак кӗппеллине урисемпе перӗнсе ыраттарђӗ пурлмалла. Лешӗ ҫилленсе аллипе хулпуҫҫине хыпаласа илђӗ те, темскер каласа, хӗрлӗ кӗпеллине ҫапса сирпӗнтерсе йађӗ. Хӗрлӗ кӗпелли сиксе тӑђӗ те:

«Ма ҫапатӑн есӗ? Ма ҫапатӑн?» тесе, хирӗҫ шатлаттарса хуђӗ. Унтан иккӗшӗ алтансем пекех ҫыхланса карӗҫ. Пӗтӗм выђакансем кусем патне ђупса пуҫтарӑнђӗҫ. Пӗрисем ђараҫҫӗ. Теприсем лайӑхрах вӑрҫђӑр тесе йӗкӗлтеҫҫӗ. «Ну-ну-ну-у! Хӑшӗ ҫӗнтереттӗр? Хӑшӗ? Лайӑхрах, лайӑхрах» тесе кӑшкӑраҫҫӗ. Хӗрлӗ кӗпелли кӑвак кӗпеллине ҫӗнсе те хуђӗ. Унтан: «Есӗ манпа ҫапӑҫасшӑнни? тесе, ҫаптармах пуҫларӗ. Ҫапӑҫнине курасшӑн тӑракан ађисем, кӑвак кӗпеллине илӗртсе, «ҫавна та ҫӗнейместӗн те, сапран ӑҫтан ҫын пултӑр», тесе кулаҫҫӗ. Кӑвак кӗпелли хирӗҫ ҫапма хӑйаймарӗ—хӑрарӗ, ҫапах та ђӗлхипе вирлӗ кастарат̆. «Усал, усал, усал. Сирӗн аҫу та санашкалах. Есӗ аҫуна хунӑ. Пиђӳ та ҫынпа вӑрҫма йуратат̆», тесе макӑрас пек кӑшкӑрат̆.

— Усал пулсан та сирӗн пекех мар-ха. Сирӗн пиђӳ Петӗр пиђисен сыснине ҫапса пӑрахнӑ. Пирӗн пиђи ҫын выђӑхне вӗлермест, тет кӑвак кӗпеллине хирӗҫ хӗрлӗ кӗпелли.

Суха тӑвакансем, хӑйсен лашисене ҫавӑта-ҫавӑта килсе, ҫӗртме курӑкӗ ҫине йараҫҫӗ. Ађасем те ҫапӑҫма пӑрахрӗҫ. Кӑвак кӗпеллӗ ађи, пиђђӗшӗ килнине курсанах, хӑйсем ҫапӑҫнине каласа кӑтартма пиђђӗшне хирӗҫ ђуптарђӗ.

Суха туса килекенсем, хӑйсен лашисене курӑк ҫине йарса, улма йӑвӑҫҫи кутне кайса лараҫҫӗ. Унта хӑшӗсем апата тытӑнаҫҫӗ, хӑшӗсем килтен апатпа килессе кӗтеҫҫӗ. Михала арӑмӗ те икӗ аллине икӗ ђӗрес тытнӑ, хулпуҫҫи ҫине кушил ҫакнӑ, Михала патне апатпа килђӗ. Вӑл, улма йӑвӑҫҫи айӗнђе ларакансем хушшинђе Михала ҫуккине кура, —пирӗн Михала килеймени мӗн? тесе ыйтрӗ апат ҫисе ларакан хура сухаллӑ ҫынниниђен.

— Вӑл анине пӗтерсех килесшӗнђђӗ. Килет те пулӗ ӗнтӗ, нумайах йулманђђӗ, терӗ лешӗ. Ҫак вӑхӑтра Михала хӑйӗн лашине ҫавӑтса вӑрмантан тухрӗ те, улӑха анса ытти лашасем патне йађӗ. Лаша, йанӑ йаманах, кӗт утса кайса, пуҫне ђиксе курӑка шӑршларӗ те тулхӑрђӗ. Унтан ҫимех пуҫларӗ. Ҫийех. Пайан выҫмаллӑх пур, тесе, Михала лашинђен уйӑрӑлса халӑх йеннелле, улма йӑвӑҫҫи патне уттарђӗ.

Михалана курсан: —вӑн, Михала та килнӗ, терӗ апат ҫисе ларакан хура сухаллӑ ҫын Михала арӑмне.

Михала халӑх патне ҫитсенех, хӑйӗн арӑмӗ умне пырса: —Мӗн илсе килтӗн? Ҫийесђђӗ, терӗ ывӑннӑ сасӑпа.



**Суха тӑвакансем, лашисене улӑха йарса, улмаҫҫи айне апатланма вырнаҫса ларђӗҫ.**

— Акӑ, ҫи. Улма йашки пӗҫертӗм. Тата сӑра илсе килтӗм те, сивӗ пуђ, тесе Михалана ђӗрессине лартса пађӗ арӑмӗ.

Михала сӑра ђӗрессине илсе, ђӗрес хӗринђенех ӗҫрӗ. Унтан ҫӳҫенкелесе: „Сивӗрех ҫав“ терӗ те, сӑрине хура сухаллине пађӗ.

— Есӗ йаланах ӗҫ вӑхӑтӗнђе сӑра тӑватӑн. Епӗр хатӗрлейместпӗр ҫавна. Ӗшеннӗ хыҫҫӑн аван вӑл. Шӑмшакка ҫемҫетет, тесе, сӑра ђӗрессине илђӗ хура сухалли.

— Кӑҫалхи сухара ӗшенмелле марха. Хӑйне хӑй тӗпренсе пырат̆. Хӑш-пӗр ҫулсене ҫӗртме сухиђђен ҫӗр типеђђӗ те, вара суха тунӑ ђухне, хытнӑ ҫӗр ҫӑкӑр пек ҫӑкӑр пек катӑлађђӗ.

Ун ђухне вара хул-ҫурӑм та тапранађђӗ, терӗ апат ҫисе ларакансенђен пӗри.

Ҫавӑнтах—Кӑҫал вӑхӑтра тухрӑмӑр. Ҫӗр типме ӗлкӗреймерӗ, тесе хуђӗ тепри.

Михала апат ҫисе тӑранђӗ. Вӑл ђӗрессисене арӑмне пађӗ те: —Епӗ ыран „плахайри“ ана ҫине кайатӑп. Есӗ Кӗркурийе кала, вӑл хӑйӗн анине паллӑ тутӑр. Хамӑнне сухаласа пӗтерсен унӑнне те сухаласа парас тетӗп, терӗ.

Арӑмӗ ђӗрессисене илсе: —Йурӗ. Апла пулсан калӑп, тесе килнелле уттарђӗ.

— Есӗ Кӗркурипе мӗн ҭул ҫинҭен калаҫрӑн? Манӑн та, хамӑнне сухаласа пӗтерсен пӗр-ик ана тума кӗрӗшесҭҭӗ, тесе ыйтрӗ хура сухалли, хӑйӗн кукӑр ҭӗлӗмне пӑхӑр йӗппипе тасатса.

— Суха туса паракан ҫук. Укҫалла сухалаттарма вӑй ҫитмест. Есӗ туса парайман-ши, тесе йӑлӑнҭӗ те, аҭалех сухалас пулӗ тетӗп, терӗ Михала.

Кун хыҫҫӑн хура сухалли, кунӗ сасӑпа: —Йурат, йурат. Пӗрне пӗри пулӑшмасан ӑҫтан май килӗ тата. Пулӑшас пулат ҫав, терӗ, хӑй укҫалла сухалама шухӑшланинҭен вӑтаннӑ пек пулса.

Сухаран килнӗ ҫынсем ҭӗлӗм турта-турта йумахлаҫҫӗ. Хӑшӗсем ӗлӗкхи пурӑнӑҫ ҫинҭен калаҫаҫҫӗ. Хӑшӗсем тырӑ-пулӑ ҫинҭен калаҫаҫҫӗ Акӑ тата Мӗкӗте Ҫимунӗ, ҫуркунне кӑна салтакран килнӗскер, салтак пурӑнӑҫӗ ҫинҭен каласа кӑтартат. Ӑна салтакри пурӑнӑҫ килӗшнӗ. Вӑл ӑна мухтат. Хура сухаллӑ ҫынпа Михала та вӗсем патне куҫса ларҭӗҫ. Вӗсем те салтак пурӑнӑҫӗ ҫинҭен итлеме пуҫларӗҫ.



**Тытӑнҭӗҫ ҫапӑҫма, пӗр-пӗрне хӗнеме.**

III.

Йал йывӑр ыйха кайрӗ. Йӑвӑҫ-курӑк та, ҫывӑракансене ҭӑрмантарас мар тесе, пӗр шавламасӑр ларат. Урамӑн икӗ йенепе ларса тухнӑ ҫуртсем умӗнҭи йӑвӑҫсем, урам хушшинҭе ҭӗр-ҭун ҫуккипе хурланса, пуҫӗсене усса выртмари аҭасен йурри итлеҫҫӗ.

Арман хуҫийӗн пайан ыйхи ҫук. Вӑл темиҫе хутҭен те хӑйӗн пӳртӗнҭен кил-картине туха туха кӗҭӗ. Темскер кӗтет, пӗлме ҫук. Кашни тухмассеренех, итле итле пӗлӗт ҫинелле, йӑвӑҫ тӑррисем ҫинелле тата килкарти хӳми хушӑкӗпе урамалла пӑхат. Акӑ, вӑл татах тухрӗ. Хура сӑкманпа, ҫара пуҫӑнах тухнӑ тухман малтанхи пекех унталла-кунталла пӑхса илҭӗ те, тӳрех пахҭаналла уттарҭӗ.

Пахҭара, йӑвӑҫсем айӗнҭи сукмак ҫинҭе икӗ кушак курпунӗсене кӑларса хире-хирӗҫ ларнӑ та, пӗр пӗрин ҫине шӑтарас пек пӑхаҫҫӗ. Вӗсем арман хуҫипе курсанах, иккӗшӗ икӗ йӑвӑҫ ҫинелле кӑҭартаттарса улӑхса кайрӗҫ. Арман хуҫин ҫӳҫ-пуҫӗ тӑрсах кайрӗ. Мӗн йапала-ши ку, тесе арман хуҫи йӑвӑҫсем ҫинелле кармашса пӑхрӗ. Йӑвӑҫ туратти хушшинҭе ларакан кушака курсан тин малалла уттарҭӗ. Вӑл пахҭаран пӗве хӗррине тухрӗ.

Пӗве хӑйӗн тулли шывӗпе тӗкӗр пек йӑлтӑртатса выртат. Пӗвен тӗпӗ те ҫук пек. Айалта ҫутӑ ҫӑлтӑрлӑ пӗлӗт курӑнат. Пӗве тавралла ӳсекен йӑвӑҫсемпе хӑмӑшсем пӗве тӗпӗнҭе те курӑнаҫҫӗ. Анҭах вӗсем кутӑнла—тӑррисем айалалла. Арман хуҫи: „ҫанталӑк лайӑх ҭухне ӗҫе тӑвас пулат. Вӑл мана пӑхӑнми пулҭӗ-ха. Пурӑна киле манран та иртсе кайӗ. Ӑна пӑртаках ҫапса аматмалла", тесе шухӑшлакаласа пӗве хӗррипе тӑвалла уттарҭӗ. Унӑн ҫулӗ ҫинҭех, пӗве хӗрринҭе темскер шап-шурӑ курӑнса кайрӗ. Ку кам-ши? Вӑл мана ан куртӑрҭҭӗ, тесе арман хуҫи пӗве хӗрринҭе ӳсекен ҫӳҫе тӗми хыҫне пытанҭӗ. Лешӗ йӳле пилӗклӗскер, ҫӳҫӗсене сапӑтса йанӑ та мӑкӑртата-мӑкӑртата хӑмӑшсем хушшинҭе темскер тӑват.

Ку сулма килнӗ пулас. Ҭӑрмантарас мар ӑна. Ӗҫне тусан хӑйех кайӗ-ха, тесе, арман хуҫи ҫӳҫе тӗми хыҫӗнҭе кӗтсе тӑрат.

Выртмари аҭасем йурлани ҫаплах илтӗнет. В сем питӗ хастарлӑн йурлаҫҫӗ. Анҭах вӗсен йурри пӗре те арман хуҫи хӑлхине кӗмест. Вӑл йӳле пилӗкли кайсанах хӑйӗн ҫулӗпе уттарҭӗ.

Михала пахҭи тӗлне ҫитсен, арман хуҫи вӗрлӗк урлӑ каҫса пахҭана кӗҭӗ. Вӑл пӗшкӗнсе, карта ҫумӗпе Михала сарайӗ хыҫне утса пыҭӗ. Кунта никам та ҫук-ши, тесе, унталла-кунталла пӑхса илҭӗ те, сарайӑн тепӗр пуҫӗнҭи кив улӑм купи патнелле уттарҭӗ.

* * *

Лаҫвар улӑхӗнҭе выртма аҭисем вут хунӑ та, вут тавра пуҫтарӑнса ларнӑ. Пӗри йумах йарат, иттисем ун ҫине пӑхнӑ та ҫӑвара карсах итлеҫҫӗ. Вӗсенҭен инҫех мар кӗт ӳсерех панӑ хӗрсемпе аҭасем йурласа лараҫҫӗ. Улӑхри лашасем тулхӑра-тулхӑра ҫийеҫҫӗ.

— Пушар! Пушар! тесе кӑшкӑрса йаҭӗ йурласа ларакансенҭен пӗри.

— Ӑҫта? Ӑҫта? тесе пурте сиксе тӑҭӗҫ.

— Вӑн! Вӑн! Хамӑр йал ҫунат. Хамӑр йал. Ҭасрах ваттисене тӑратас, тесе, кӑшкӑрса, хӑшӗ пӗрисем ваттисем ҫывӑрнӑ ҫӗрелле ҭуптарҭӗҫ. Теприсем ӑна кӑна пӗлмесӗр йе йал йеннелле, йе лашасем патнелле вӗҫтерҭӗҫ.

— Ай тур, тур! Мӗн тӑвас хаҭ, мӗн тӑвас, теҫҫӗ хӗрӗсем.

Виҫ-тӑват аҭи ваттисем патне ҭупса ҫитрӗҫ. Ҭасрах васкаса, пушар! Йал ҫунат! тесе ваттисене вӑратрӗҫ. Ваттисем, мӗн тӑни, ним тума пӗлмесӗр хӑйсен аҫамӗсене ӑҫта выртнӑ ҫавӑнтах пӑраха-пӑраха хӑварса йалалла ҭуптарҭӗҫ. Михала та ыйхаран вӑранса, ҫамрӑксене лашасем тытса пыма хушса, халӑх хыҫҫӑн йалалла ҭуптарҭӗ.

Пурте хашка-хашка ҭупаҫҫӗ. Хӗп-хӗрлӗ хӗлхемлӗ вут йавӑна-йавӑна ҫунат. Михала, пушар хӑйсен урамӗнҭе тухниҫе кура, халран кайрӗ. Ӑна Мӗкӗте Ҫимунӗ хӑваласа ҫитрӗ те: —Михала пиҭҭе, пушар сирӗн урамра мари ҫав, терӗ. Кун хыҫҫӑн Михала пушшех ҭӗтресе ӳкрӗ. —Ан та калах, хамӑр килех ҫунат пулмалла, терӗ вӑл тытӑнҭӑклӑ сасӑпа.

Пушар вӑйлӑланнӑ ҫемӗн вӑйлӑланса пырат. Утпа килекенсем, лашисене ҫаптарса, ҫуранисенҭен ирте ирте кайаҫҫӗ. Вӗсем хыҫҫӑн тусан кӑна йавӑнса йулат.

Малтантарах ҭупнисем йала ҫитсенех: пушар! пушар! Ҫунса кайаттӑр! Хӑвӑртрах тӑрӑр, тесе, пӗр кантӑкран тепӗр кантӑка ҭупса ҫывӑракансене вӑратаҫҫӗ. Михала арӑмӗ те, ыйхаран вӑранса хӑйӗн 3 ҫулхи аҭине йатса урама ҭупса тухрӗ. Аҭи амӑшӗ аллинҭе ним пӗлми макӑрат.

Михала сарайне хӗп-хӗрлӗ вут ҫавӑрса илнӗ, ҫывӑха пыма ҫук пӗҫертет. Пур йенҭе те халӑх ҭупат. Кӑшкӑраҫҫӗ, ҫухӑраҫҫӗ. Хӑшӗ пӗрисем макӑраҫҫӗ.

Вут Михаланне пӳртне те тивсе илђӗ, ҫав вӑхӑтрах йунашаррин сарайӗ ҫине те куҫрӗ. Харсӑртараххисем ҫуртсенђен йапаласем йӑтаҫҫӗ. Хӑшӗсем—хуралҫӑ ӑҫта?! Насус ма илсе килместӗр? Хӑвӑртрах илсе килӗр! тесе кӑшкӑраҫҫӗ.

Йунашар йал ђиркӳвӗн ђанӗ пӗтӗм таврари халӑха пушара хирӗҫ ђӗнет.

Вут халӑха кӗтмест. Вӑл хӑйӗн ӗҫнех тӑват̆, йавӑна-йавӑна ҫунат̆. Хытӑ ҫуннипе ҫил кӑларђӗ. Ҫунакан ҫуртсем ҫинђи улӑм, калпак пек ҫӳлелле хӑпара-хӑпара кайса, айӑкка вӗҫсе ӳкет.

Михалапа Мӗкӗте Ҫимунӗ те хашкаса ђупса ҫитрӗҫ. Вӗсем ҫунакан пӳрте йапаласем йӑтма кӗрсе кайрӗҫ. Анђах йапалине нумайах кӑлараймарӗҫ, вут айалтанах тивсе илђӗ те, пӗҫерниipe иккӗшӗ те тухса тарђӗҫ.

Синер трушинӗ икӗ лашапа насус турттарса ҫитрӗ. Вӗсем ђылайӑн, хӑшӗсем утпа, хӑшӗсем ҫуран. Трушин пуҫлӑхӗ пуринђен малта — Ҫул парӑр, ҫул парӑр, тесе, насус вађђи ҫул уҫса пырат̆. Пушар патне ҫитсенех, насуса вут хӗринђи ҫурт патне лартса—Шыв парӑр! шыв!—терӗ трушин пуҫлӑхӗ. Ҫав вӑхӑтрах икӗ урапапа шыв турттарса та ҫитрӗҫ. Йалти насуса та туртса килђӗҫ. Икӗ насуса вырнаҫтарса лартрӗҫӗ те, шыва ҫунан вут ҫине сирпӗтме пуҫларӗҫ. Хӑшӗ насус усласҫӗ. Хӑшӗсем витресемпе шыв йӑтса насус патӗнђи каткасем ҫине йараҫҫӗ. Пиђкесемпе те турттараҫҫӗ.

Икӗ насус ӗҫлет пулин те, пушара ҫӗнтерме ҫук, вӑл хӑйӗн ӗҫнех тӑват̆. Хайне хӑй вӑйланса пырат̆. Хӗлхемсем вӗҫе вӗҫе кайса, тепӗр ҫурт ҫине ӳксе вӗсене те ҫунтарма пуҫлаҫҫӗ. Пиллӗк киле вут тивсе илђӗ. Арман хуҫи килне те хӑвармарӗ.

Унтан та кунтан трушинсем пуҫтарӑнаҫҫӗ. Вӗсем мӗн пурӗ 9 ҫитрӗҫ. Шыв турттаракансем те ђылайланђӗҫ.

Вут лӑпланма пуҫларӗ. Малтантарах тивсе илнӗ ҫуртсем шӑђ кӑвар кӑна пулса йулђӗҫ. Кайрантарах тивсе илнӗ ҫуртсене, хӑшне ҫурри ҫунсан сӳнтерђӗҫ. Хӑшне пакурсемпе турта турта салатса тӑкрӗҫ.

Арман хуҫи хӑйӗн килӗ ҫунассине ҫапах шутламанђђӗ, ҫавӑнпа та вӑл хӑйне хӑй кӗвӗҫсе—Вут Михала килӗнђен тухрӗ. Вут тухнӑшӑн вӑл айӑплӑ. такама тарӑхтарнӑ пулмалла та, вӑн хађ ӑна ђӗртсе йађӗҫҫӗ—тесе халӑха пӑтратат̆.

— Каҫхи пушар трупа таврашӗнђен тухнӑскер мӑр ӗнтӗ, ђӗртсех йанӑ ҫав, теҫҫӗ арман хуҫи ҫывӑхӗнђе тӑракансем.

Ҫывӑхри ҫынсем хӑй майлӑ йумахланине кура, арман хуҫиййӗ:—Ђӗртсе йанӑскер пулмасӑр, ђӗртсе йанӑскер ҫав. Халӗ ун пирки пилӗк килӗн хурлӑх курас пулат̆. Халӑхпа йӗркеллӗ пурӑнманшӑн вутта пӑрахмалла ӑна, тет.

— Вутта пӑрахас мар. Кам пӗлет, такам айӑплӑ. Те Михала, те ђӗртсе йараканни, терӗ лаҫвар улӑхӗнђен килнӗ хура сухалли.

— Мӗнле пӑрахас мар!? Ун пирки пирӗн хурлӑх курмаллаи мӗн? Лайӑх ҫынна кам ђӗрттӗр? Пӑрахас ӑна! тесе арман хуҫи, хурђка ђӗпӗ тытма вӑҫсе аннӑ пек, ҫӳҫӗсене вӗҫтерсе Михала патнелле ђупрӗ. Ун хыҫҫӗн тата ик виҫ ҫын ђупрӗҫ.

Михалан, арман хуҫисем хӑй патне пынине курсан, вут хӗрринђе пулин те, пӗтӗм шӑм-шакӗ шӑнса карӗ, ҫамки ҫине сив тар персе тухрӗ.

— Мӗн хӑтланаттӑр есӗр? Ҫунса кайниipe ҫитмен; хӑйне те ҫунтарасшӑни? Михала пиђђене вутта пӑрахтармастӑп, тесе пӗтӗм вӑйпа кӑшкӑрса йађӗ Мӗкӗте Ҫимунӗ, ун хыҫҫӑн ыттисем те арман хуҫине хирӗҫ тӑђӗҫ.

Арман хуҫиййӗ, Мӗкӗте Ҫимунӗ ҫине ҫиллеисе, шӑлӗсене шӑтӑртаттарса тискер кашкӑр пек тавралла пӑхса илђӗ. Унтан, хӑй майлӑ пулакансем ҫуккине кура—йурӗ, кунпа та ҫитӗ, асӑнмаллӑх пулђӗ ӗнтӗ. Епӗ ҫуртсӑр пурӑнас ҫук. Михалапа Мӗкӗте Ҫимунех мана пырса йӑлӑнӗҫ, тесе шухӑшласа илђӗ.

Ҫак вӑхӑтрах пушар патӗнђи ҫынсенђен пӗри:—тӑвансем! арман хуҫи Михала ҫине пиҫӗ тарат̆. Епӗ вутта та хӑй ђӗртнӗ пулӗ тетӗп,—терӗ арман хуҫи ӑшне кӗрсе, унӑн шухӑшне пӗлсе тухнӑ пек. Кун хыҫҫӑн пӗтӗм пушар патӗнђи халӑх пӑтранма пуҫларӗ. Кашнийех уйрӑмӑн кӑшкӑрат̆.—Ђӑнах та вутта арман хуҫи хӑй ђӗртнӗ пулмалла. Ҫуркунне Михалапа ҫапӑҫсан та: сана асӑнтарӑп-ха тесе йунава хуђӗ, тесе пӗтӗм халӑх сассине ҫӗнтерсе кӑшкӑрђӗ пӗр ҫамрӑк ађа.

— Арман хуҫи ђӗртнӗ ӑна. Вӑл хӑйӗн килне пӗрккӗн страхховат̆ тутарђӗ. Йапалисене те ампара куҫарђӗ тет. Ӑна хайне вутта пӑрахмалла! Тытӑр! Пӑрахӑр ӑна, тесе халӑх арман хуҫи патнелле куҫрӗ.



— Ђӑнах та арман хуҫи вутта хӑй ђӗртнӗ пулмалла!

Арман хуҫиййӗ, халӑх хӑйне хирӗҫҫине курсанах, тар ма тытӑнђӗ. Анђах ҫилӗллӗ халӑхран тарса ҫӑлӑнаймӑн. Арман хуҫиййӗн хулпуҫҫиййӗ ҫине, пӗр самантра пуша пакурӗ пырса ларђӗ. Ӑна туртса та ӳкерђӗҫ. Вуталлр сӗтӗреҫҫӗ. Арман хуҫиййӗ йӑнӑшат̆. Вутта ан пӑрахђђӑа тесе йӑлӑнат̆. Ҫапах та вутне хӑй ђӗртнине пӗлтерместр

Урнӑ, тарӑхнӑ халӑха йӑлӑннипе ђараймӑн. Вӑл арман хуҫине вутта пӑрахма сӗтӗрет.

Мӗкӗте Ҫимунӗшӗн, темђул айӑплӑ ҫын пулин те, ӑна вута пӑрахни тискер халӑх ӗҫӗ пек туйӑнат̆. Ҫавӑнпа та вӑл:

— Йулташсем! Вутне арман хуҫиййех ђӗртнӗ пултӑр. Анђах пире, хамӑр пӗрккӗн ӗҫленӗшӗн Канаш суђӗ айӑплама та пултарат̆. Ман шутпа арман хуҫине сут аллине памалла. Вута пӑрахас мар, тесе халӑха пусарма шутларӗ. Анђах Мӗкӗте Ҫимунӗ каланӑ сӑмахсем, тарӑхнӑ халӑх хӑлхине кӗреймерӗҫ. Унӑн сӑмахӗ пӗтиђђенех арман хуҫине вут патне сӗтӗрсе кайрӗҫ...

Сӗлӗ хӑмӑлӗ хушшипе, кӗрхи вӗтӗ ҫӑмӑр айӗн, Михалапа хура сухаллӑ ҫын тата тепӗр ӳсе ҫитнӗ ҫамрӑк ађа пыраҫҫӗ. Вӗсем пайан ҫуллахи ӗҫпе сута тӑнӑ. Халӗ сут ҫинђен йумахлакаласа киле тавӑрнаҫҫӗ.

— Хӑй айӑплине пӗлтересшӗн мар мӗн, шеремет. Малтанах сут умӗнђе те пӑркаланса тӑђӗ, тет хура сухалли ҫамрӑкки ҫине пӑхса.

—Пӗлтересшӗн мар пулђӗ те, анђах сутран пытарма хӗн. Вӑл темле майпа та шыраса тупӗ. Арман хуҫи

пытарасшăн тăрăшрĕ пулин те сут вăл айăплине, çурта вăл ţĕртсе йанине пĕлţĕ.

— Ţăнах та сутран пытарма çук. Арман хуçи те вăн малтанах пытарасшăн тăрăшрĕ те, кайран сут тĕрлĕрен ыйтусем парса ăна пăтратса йаţĕ. Вара хăйех: епĕ Михалана асăнтарăп-ха, сана тесе йунава хурсаţţĕ, тесе каласа йаţĕ. Кайран, вутне ţĕртнине те пытараймарĕ, терĕ хура сухалли.

Михала сут ĕçĕпе питĕ кăмăллă пулнă. Вăл, арман хуçине айăпланăшăн савăннă та:

— Халĕ ĕнтĕ ăна, халăха хăйне пăхăнтарасшăн вут ţĕртсе çунтарнăшăн сут айăпларĕ. Сут ăнашкал ĕçсемшĕн айăпланине кура, малашне ыттисем те киревсĕр ĕçсем тума пăрахĕç, терĕ хăйĕн икĕ йулташĕ çине пăхса.

— Сут çех мар-ха. Есĕр Мĕкĕте Çимунĕпе иксĕр ţарман пулсан, ăна халăх вутта пăрахаţţĕ вĕт. Пырат, есĕр ţартăр та, çăлăнса йулţĕ. Атту ĕмĕрлĕхех кайаţţĕ.

Ку сăмахсем хыççăн хура сухалли çамрăкки каласа пĕтериţţенех: Есĕр те çав, теме ţартăр, ţармалла марţţĕ, çунса кайтăрţţĕ пĕрех хут, тесе хуţĕ.

Михала хăй çунса кайса. хăй хурлăх курнă пулин те, хура сухаллин сăмахĕпе килĕшмерĕ. Вăл: ăнашкал ĕçсене хамăр ирĕкпе тума йурамаст. Епĕр йанăшма пултаратпăр. Хăварах шухăшлăр-ха. Малтан мана хама пăрахма пуçларĕç. Ку ĕçре епĕ мĕнтен айăплăха? Епĕ вĕт пĕр айăпсăрах çунса кайаттăмţţĕ. Çавнашкалах ыттисемпе те йанăшма пултаратпăр. Çавăнпа та ăнашкал ĕçсене сут аллине парас пулат. Çут айăплипе айăплă маррине ţасах тупма пултарат. Ку пĕр йенţен, тепĕр йенţен, пуйансем пире хăйсем майлă пулманшăн ţĕртсе йарса çунтараççĕ пулсан, епĕр апла мар. Епĕр вĕсене хамăр ирĕкпе мар,саккун хушнă тăрăх айăплатпăр, терĕ хура сухаллипе çамрăккине ăнлантарса.

# ХАПРĂКРАХ!..

Темшĕн, темшĕн ман ţĕре
Хапрăкрах вĕресшĕн,
Çак хисепшĕн ţыс ĕçре
Вăй хурсах ĕçлесшĕн?!.

Çамрăк пуçшăн иртнĕ çул
Манăн ĕç хиртеţţĕ.
Тырă выр та, утă çул!—
Йуррăм ман вĕçеţţĕ.

Ак пайан еп хапрăкра,
Станокпа тăванлă;
Хапрăкрах еп, хапрăкрах!—
Йур йурлап мухтавлă.

Ţыслă ĕçшĕн ĕç алли
Хăй ĕçпе мĕн тумĕ!..
Хăвăрт ţуп ес, саспалли!—
Кĕвĕлет мотторĕ.

Тĕш тыр ылттăн пуţаххи,
Еп сана манмастăп!
Ак пайан еп саспалли
«Сунтал»ра пухатăп.

Еп манмастăп савнипе:
Кĕпе ум тĕрлеţţĕ.
Еп те хам ак хут çине
Пĕрţĕн тĕр тĕрлетĕп.

Еп тĕрлен тĕр хаксăр мар—
Çут Çулпуçĕн тĕрĕ!
Çав тĕрпе, тăван патвар,
Утăп, утăп!—терĕ.

Çамрăк пуçăм вăхăтра
Ик ĕçпе паллашрĕ...
Манăн ĕçĕм, çун вутра!..—
Хам ţĕре вутлашрĕ.

Маншăн ĕмĕр—вăл хакра
Хĕрӳ ĕç шавлавĕ!
Машшин сасĕ хăлхара—
Ылттăн тыр кашлавĕ...

Алăм, пух ес саспалли,
Касса çийĕн хăвăрт!
Ӳс, пиç, тырă пуţаххи!..—
Ал тытат ман сăвă.

Вут вăй ил, кĕрле, моттор,
Пиţетлех, машшинă!
Ţыслă ĕçшĕн еп маттур,
Кӳр, верстаткă, шилă!..*

Акă мĕншĕн ман ţĕре
Хапрăкрах вĕресшĕн,
Çак хисепшĕн ţыс ĕçре
Вăй хурсах ĕçлесшĕн!..

*Ж. Йанкас.*

* Кассă, верстаткă, шилă—типокрафинţе ĕçлекен напорщţĕкĕн ĕç хатĕрĕсем.



— Хулана, кăпăр-капăр илме...



Çураки пĕтерсе таврăнаççĕ.

# ТИНӖС ÇИНЂЕ

### ХУММА ÇЕМЕНӖН очђӗркӗ.

АТӐЛ пӑрахуђӗсем Аçтӑрхана çитереççӗ те, малалла каймаççӗ. Малалла, Каçпи тинӗсне кӗртсе хӑвариђђенех, пӗр çӗр çухрӑм хушши ытлараха, пӗђӗк шкунӑ илсе кайаҭ. Епӗр ларнӑ шкунӑ «Влатимӗр Илйиђ Уљйанӑв» йатлӑ. Шкунӑ Атӑл пӑрахутӗнђен вирлӗрех илтерет. Çитермелли вырӑна: ђасрах, ђасрах çитерес, тет вӑл. Тинӗсе шалах çитерсе хӑвараҭ те, тинӗсрен Атӑлалла çӗнӗ пӑсаширсем илсе хӑпараҭ.

— Ах, тинӗс, тинӗс! Мӗн пекши вӑл тинӗс?..

Епӗр, Петӗрпе иксӗмӗр те, халиђђен тинӗс курман çынсем. Çавӑнпах та, Самартан ђукунçулпа кайас çӗртенех, шывпа кайма хавас пултӑмӑр. Тинӗс хӑйӗн усал мыскарисене кӑтартасран хӑрама мар, хамӑрӑн курас килет вӗсене. Тинӗсре акӑ питӗ лӑкантараҭ, силлентерет, теççӗ. Силлентернӗ вӑхӑтра ура çинђе тӑма çук, выртас пулаҭ, ахаллӗн хӑсас килсе аптӑратаҭ. Нумайӗшӗ, пуринђен ытла хӗрарӑмсем, хӑсса шалт ђире кайаççӗ пулаҭ. Çапла, мӗнле пӗрре курса пӑхас марха тинӗсре силлентернине! Йеплеши вӑл?.. Епӗр—пӗђӗк аванҭуриссем. Мӗн те пулсан çӗнӗ йапала шырама тухнӑскерсем. Мӗнтен хӑрамалли пур пирӗн! Пӑсаширсенђен хӑшӗ пӗри, тинӗсре хӑсмалла пуласран хӑраса, хӑйсемпе пӗрле лимон нумай илнӗ. Лимон çисен хӑстармасҭ, тет. Пирӗн лимон тавраш çук. Кирлӗ те мар.

— Ну, Çемен, тинӗсе тухатпӑр вӗт. Хумсем ӑшне пулмӑпӑри? тесе кулкалаҭ манӑн Петӗр.

— Пулмӑпӑрӑҫке.

Атӑл çыранӗсем куçран ђасах çухалмаççӗха: тинӗсӗ хӑй çапах айакра пулас. Пур пек пристӑнӗ, пулӑçсем пурнакан ђиркӳллӗ йалӗ сылтӑм йенне тӑра-тӑра йулаҭ. Аслӑ йухӑмран айккисенелле çаплах пӗђӗк йухӑмсем пӑрӑна-пӑрӑна кӗреççӗ. Çыранӗсен хӗррисемпе, шурлӑпутӑклӑ вырӑнсем йышӑнса илсе, йешӗл-симӗс те сарӑхса ватӑлнӑ хӑмӑш-троçтник вӑрманӗ тӑршшипех ашкӑрса лараҭ. Пулӑçсен парӑс карнӑ, парӑс карман пысӑк-пӗђӗк киммисем тинӗсе çитеђђен те татӑлмаççӗтӑр. Аçтӑрхан пулӑçисен пӗтӗм пурнӑçӗ çакӑнта ӗнтӗ, çакӑнта—тинӗс пуçланнӑ çӗрте, Хвалын*) хӗррисенђе! Вилсессӗн те—çакӑнта вилеççӗ вӗсем. Хумсем—пулӑçсене пурӑннӑ ђух ађашлаççӗ, вӗсемпе кӗрешмелле выљаççӗ, пытарасса та хумсем хӑйсемех, хӑйсем çуса тасатса, хӑйсем вилӗ йӳрри йурласа, вилӗ кӗсли каласа пытараççӗ. — Ай, хӑрушӑҫке! тесе калӗ хӑшӗ пӗри. Пулӑçсемшӗн ним те хӑрушӑ мар. Пулӑç пурнӑçӗ, йе шыв хӑвађӗ — пур пӗрех вӗсем. Вӗсем — пӗр йапала. Вӑл—пурнӑç! Шыв çинђи илемлӗ, ирӗклӗ, тӗлӗнмелле пурнӑç!..

— Поет! Поеçи шухӑшӗсем кӗђӗçим пуçа? Пит ытараймасӑр пӑхатӑн та... Аҭа, анса винократпа ђей ӗçӗпӗр, тет Петӗр сасси.

Ман трӳма**) пӗре те анас килмест. Пӑђђине те пӑђӑ, тата мӗн иттерес пур унта! Вырӑссем, Капкас çыннисем, перссем, туркменсем, йеврейсем, ватти-çамрӑкӗ пурте, çӳлти-айалти саксем тӑрӑх, туллийех ларса тухнӑ. Хӑшӗ ывӑннӑ сӑнлӑ: çывӑраççӗ, йе çывӑрнӑçывӑрман выртаççӗ, лараççӗ. Хӑшӗ ахаљ шухӑша кайнӑ. Çамрӑксем пӗр-пӗрне куç хываççӗ, ахӑлтатаççӗ, кулаççӗ. Хӑшин ађи-пӑђи макӑраҭ. Хӑшӗ тата ӗçсем, пурнӑçсем çинђен халаплаҭ. Хӑшӗ апатланаҭ, ђей ӗçет. Курманим епӗ вӑл халӑха? —Ах, Петӗр ђӗнет те, анса улӑхасах пулаҭ йапаласем патне. Темле, ман йулташа, кӑшт киђемлӗрех пулмалла: йалан каллӗ-маллӗ уткалаҭ вӑл, пӗр вырӑнта тӑмасҭ, таврари илем пӑхӑнтарса илеймест ӑна.

Акӑ епӗр каллех çӳлти хут хӗррине—палккона тухса тӑнӑ. Тинӗс йенђен çил çапса хӑпартаҭ хумсене. Шкунӑ темле, лӑканкалама пуçларӗ. — Е-е, Çемен, пуçлаҭ вӗт хайхи, силлентерме, е? —Пуçлатӑрах, тетӗп Петӗре хирӗç. Хамӑр, ђӑн айванлах ӗнтӗ, çил вӑйланнӑшӑн хӗпӗртенӗ пек пыратпӑр. Вӑйлантӑрахђӗ ытларах. Ытларах вӑйлантӑр ку çил! тесе кӗлтӑватпӑр ӑшӑмӑрта. Шкунӑ ак шыва ђашлаттарса, касса, сасӑпа çурса та хӑй майлӑ кӗрлесе кӑна пыраҭ. Ах, йурататӑнҫке хӑш ђух çав кӗрленине! Айхӑ килнине таçта сирсе йараҭ вӑл. Ӑшра та çил вӗрет вӑл вӑхӑтра. Çын йалан пекех ура çинђе. Йе пӗр вырӑнта тӑраҭ, йе уткаласа çӳрет. Сасӑ кӗрлени пире, темле, йалан сыхланма калаҭ.

— Ей, йулташ, ан çывӑр! тет. —Çывӑрма йурамасҭ. Сӗнк пулма та йурамасҭ халӗ!.. Сыхӑ пулмалла йалан! Сыхӑ, сыхӑ!.. Сыхӑ пулни—ђи аван йапала.

Çапла хушаҭ кӗрленӗ сасӑ. Çил, ђӑнах та, вӑйланнӑçем вӑйланаҭ. Пире тинӗсе ӑсатакан пӗђӗк шкунӑ «Влатимӗр Илйиђ Уљйанӑв», хумханса выртакан аслӑ шывӑн сип-симӗс питне хыттӑн ђӗре-ђӗре илет те, хумсене айаккалла вӑйлӑн çапа-çапа ывтӑнтараҭ. Кӑпакклантараҭ. Ђашкӑрттараҭ. Пирӗн пата çитех сирпӗтет çӳлелле. Ӑшӗнђе тата машшинӗ темскер кӳт-кӳт! кӳтлеттерсе пыраҭ. Çапла—пӑс хӑвађӗпе шыв хӑвађӗ кӗрешеççӗ. Иккӗшӗ те парӑнасшӑн мар пӗрне пӗри. Вӑхӑђӗ вӑхӑђӗпе вӗсем шав-шав! шавласа, ахӑра-ахӑра йараççӗ. Вӑйӗсемпе танашса пӑхса саваӑнаççӗ курӑнаҭ ун ђух. Вара каллех майӗперех ытӑнаççӗ. Хум тӑррисем темле, хӑйсем майлӑ, шӑй-шӑй! шӑхӑрса, вӑввӑвв! ӑвлатса çӳреççӗ ирӗкре.

— Ес, Çемен, илтетӗни: мусӑк пур вӗт çакӑнта. Мусӑк! Çак шыв çинђе пулса пыракан вӑй-хӑват илемӗ, йулашкинђен, ман йулташа та çавӑрса илђӗ.

— Пур çав, тетӗп. — Ђи хӑватлӑ мусӑк акӑ ӑçта вӑл! Етеме тӗрӗссипех вӑй хушса паракан, хӑравçӑран паттӑр туса йаракан мусӑк.

— Астӑватни? тет çавӑнтах ман Петӗр. — Пӗрре епӗр санпала пӗр тахӑш хутошнӗк карттинне нумайђђен киленсе пӑхса тӑтӑмӑр. Ђаплӑ нимӗç композиттӑрне, Љутвик Петховӗна ӳкернӗђђӗ пулас. Ун тавра аслатиллӗ хайар пӗлӗтсем хупӑрласа илнӗ. Урлӑ пирлех çиçӗм çиçет. Мӗне пӗлтеретши ку? терӗмӗр епӗр. Ахӑр, композиттӑрӑн аслати ђухнехи пекех хӑватлӑ, тӑвӑллӑ пултаруллӑхне кӑтартнӑ-тӑр, терӗмӗр вара. Кунта та акӑ йалтӑр-йалтӑр çиçӗм çиçсе, аслати шатӑртаттарсан, хумсем те асса кайсан, мӗнле вӑй-хӑват, çтихийӑ курӑнса каймӗши ун ђух?.. Ак, пӑх ӗнтӗ хаљ, тинӗс пуçланса карӗ. Тинӗс!

Ђӑн та, Атӑл çыранӗсем паçӑрах куçран çӗтрӗç. Лере, лере ав, пит инçетре, пӗр шӗвӗр сӑрт тӑрри пеккискер курӑнса лараҭ. Анђах вӑл та хуллен-хулленех

*) Хвалын—Каçпи тинӗсӗн авалхи йаðӗ.
**) Трӳм—шкунӑн айалти хуђӗ.

çĕтет. Нимле çĕр те куранмасть текех. Епĕр ҫăн тинĕснех тухатпăр. Пире хирĕç тăвалла мĕн пурĕ те пĕр шкунă кăна иртсе карĕха. Паршасем иккĕ-виççĕ те пулҫĕç. Пулăççен киммисем, сахалланма мар, нумайланса пынă пек. Тинĕсе тухса шалалла кĕнĕ çĕре шăп кас пулҫĕ. Тĕттĕмре тинĕс хумĕсене те темле сивĕ сăн çапрĕ. Хуп хура хумсем йавăнмаллах йавăнаççĕ. Шкупа хыттăпах силлентерет. Каçхи сăн çапла кăшт шиклентерме те пăхать. Шўт тăвасшăн пулмалла пăртак. Çук, хăрамастпăр епĕр ун пеккинҫен. Пĕр тĕлте ака çутăсем ăраснах йалтăр-йалтăр çутăлса карĕç.

— Мĕн ку?

— Рейт*)... 12-мĕш рейт!

— Пысăк шкунă çине ларатпăр ĕнтĕ. Ыран кăнтăрлапа Махаҫ-Калана**) çитетпĕр.

Пăсаширсем йашăлтатма пуçларĕç. Трўм ăшĕнҫи халăх йапалисемпе çўлелле тапаçланать. Пĕр-пĕрне хĕсме тапратрĕç. Пурте малти ҫерете лексе тинĕс шкунĕнҫе лайăхрах вырăн йышăнасшăн.

— Пуп-пу!.. Тут-тууу!.. У-у-ăх! ухлеттереççĕ рейтри парăçнĕксем***). Сассисем вĕсен сывлăша хыттăн çурса пăрахса, каçхи тинĕс çинҫе нумайҫҫен йантраса тăраççĕ.

Епĕр куçса лармалли пысăк шкунă «Купанов» йатлă. «Влатимĕр Илийҫ Улйанав»па унăн хушшине ака урлă каçă пăрахрĕç. Халăх нимне пĕлмесĕр ҫышăнать. Кăшкăрашать. Пĕрне-пĕри ахалех йатлаçтарса, çилентерсе илет. Халиҫҫек хăйне хăй пит йĕркеллĕ пек тытнă çынĕ те кунта йĕркерен тухса кайма хăтланать. Çавăн пек пулать вăл хăш ҫух етем тени. Хăйне кăна лайăхрах пултăр. Уҫҫоннăй Тарвĕн вĕрентни кун пек çĕрте те çийеле тухасшăн имĕш. Телейĕмĕре пула, пирĕнпе пĕрле ҫеретре ĕретлĕ пăсаширсемех тăраççĕ. Хыçра ав икĕ парăшҫă. Иккĕшĕ те кулма, калаçма йуратакансксерсем. Петĕр хаҫ вĕсемпе шўт тăвать. Ман умра тата— икĕ тутарла тумланнă майрапа, пĕҫĕк аҫисемпе ни ҫăвашла, ни тутарла арçын. Сарă шĕвĕр сухаллăскер. Пуçĕнҫе çăм шлепке. Сасси çинçе те, сăмаха пĕтĕрпĕтĕр çеç пĕтĕртеттерет. Ҫăвашахши ку ара? Ай, хамăрсăр пуçсăр, тата пĕр-пĕр ҫăваш ҫунĕ пулсассăн

*] Рейт — тинĕс пăрахуҫĕсем тăмалли вырăн. Вăл тинĕс хĕррин҆ҫен нумай шалта пулать.

**] Махаҫ-Кала — Такестан респуплĕкĕн тĕп хули, ĕлĕк форт [креппăç] Петровск йатлă пулнă, Каçпи тинĕсĕн Капкас йенҫе.

***] Парăçнĕк — парăс карса çўремелли. Шкунăсене пурне те пекех парăс карса çўремелле тунă.

çакăн пек катара! Татах аванҫҫĕ вăл! Хамăр халăх çыннине ытларах йуратни—натсионалисăмла, йе патриоттисăмла шухăш—калаттармасть ăна çапла. Çук. Тăван йун систерет кунта хăйне. Çавăнпа та çăм шлепке пуçпа тўрех ҫăвашла тапратса йаратăп. Вăл мана йалан вырăсла тавăрса пырать. Епĕ пушшĕ интересленсе карăм. Мĕнлескер ку ара? Епĕ—ҫăвашла, вăл—вырăсла. Петĕр манăн тата тутарла пуçларĕ çакăнпа.

— Син çуашмă, таттармă? (Ҫăваши ес, тутари?)

— Çуаш... Хасĕр çуашла ăнаттăм (ҫăвашла маннă).

— Кайа парассăн?

— Паккуга... Ăнта ĕшлепĕс (Паккува... Унта ĕçлетĕп).

Тĕлĕнмелле! Кун пек тутара тухнă ҫăваша çак йулашки çулсем хушшинҫе пурĕ иккĕмĕш хут куратăп епĕ. Пĕрне, Куçма Михаҫине, «Тутарла ҫăваш» калавра кăтартнăҫҫĕ. Михаҫан йулашкинҫен каланă, хăй йуратнă сăмахĕ çаплаҫҫĕ унăн: „Турккестана, йе Урала, йе Инçери Хĕвелтухăçне кайатăп. Пур çĕре те çитсе пăхас“, теҫҫĕ вăл. Хаҫ курни ака, пирĕнпе пĕрлех, Хвалын тинĕсĕпе инçете, çўллĕ Капкас тăвĕсем патне çитех кайать. Ерне, вĕсем манăн иккĕшĕ икĕ çын, икĕ тĕрлĕ сансăпатлăскерсем. Анҫах, çапах та, иккĕшĕн те пĕр майлă йун вĕреннине çавăнтах туйса илтĕм епĕ. Ку йышши етемсем—ҫăн-ҫăн пурнăç аҫисем вĕсем! тесе хĕпĕртесе калатăп хам ăшăмра. Вĕсем—ҫăн-ҫăн пролеттарисем. Тăван йалне, килне тахçанах пăрахнăскерсем. Йе, пĕтĕмпех пăрахман пулсассăн та, хăйсене тытса ҫаракан çирĕп тымар—ана-çĕр тени—çук ĕнтĕ текех. Пайан пĕр-пĕр хапрăк-савăтлă хулара ĕçлет, ыран—теприн҆ҫе. Пайан Сталĕнă (Йусăв) районĕнҫе, шахтăра, тейĕпĕр. Ыран—Пакку тавраш̆ĕнҫе, нехтă кăларнă çĕрте, йе пĕр-пĕр урăх ĕçре: çлессăрта, тимĕрç лаççинҫе... портра... пăрахут çинҫе... Пур кĕтес те тăван кил пулать вара. Пĕтĕм çут тĕнҫе—тăван çĕршыв. Çĕр хут та тавтăватăп епĕ тутар тĕнĕн аслă Макомет пророкне: ман тĕлтен çавăн пек çынсем йарса кăтартнăшăн, çавăн пек кайăкла паттăрсемшĕн тавтăватăп. Ах, ҫăнах та, еп асăпакан типсем пăртак ҫăваш ҫĕлхине маннă вĕсем. Мĕн тăвас ара мапакана? Пурте мар вĕт, хăш пĕри кăна вăл. Ун вырăнне йепле тĕнҫе касма пĕлеççĕ! Йепле ĕçлеççĕ вĕсем пур çĕрте те! Йепле хăнăхаççĕ пурнăçран илмешкĕн! Ку ĕнтĕ— етемшĕн ҫи пысăк телей. Ҫи пысăк савăнăç. Мĕн кирлĕ тата сире?

*(Йулашки çитес №-те).*

## Çĕн Кун аки.

*ÇЕÇПĔЛ МИШШИ.*

Кăвак-çутран шăратнă акапуç,
Туртийĕ хушшинҫе хĕвел ташлать.
Çĕн Кун—Шевле сарриллĕ ылтăн пуç—
Ҫăваш уйне ака тума тухать.
Çĕн Кун аки-пуçĕн хĕп-хĕрлĕ тимĕрри
Касса-касса уй урлă кас тăвать.
Кас-кас айне ҫăвашăн иртнĕ ĕмĕрри
Вилсе выртса пытаранса пырать.
Çĕн Кун пăхать: ун ылтăн аки-пуç
Кăпăшласа хуратрĕ хытнă уйсене;
Сип-симĕс улăх урлă тĕпсĕр сив сăл-куç
Уйсем çине савса сапать шывне.
Çĕн Кун пин-пин кăварлă хурăç аллипе
Сар Хĕрлĕ кунтăкран уйсем çине
Кăварлă ывăçпа пин, çĕр пин çăлтăр акрĕ.

Ирхи Шевле ун хыççăн ылтăн сўрипе
Çĕр пин çăлтăрлăн çунан Ҫăваш Çĕрне
Тĕр тĕрлесе, сўрелесе пăрахрĕ.
Çĕн Кун акни шăтма вăхăт çитсен,
Çĕн Кун умне хура çĕр айĕнҫен,
Хĕвел калҫи пулса, хĕвеллĕн сарăлса, хайуллăн,
Ҫăваш çыннин кунçулĕ тухĕ.
Укаллă, ылттăн-кĕмĕллĕ хĕлхемĕ унăн
Кĕсле сасси пулса çĕр тăрăх шуххăн йухĕ.
Хăватлă, çĕн ҫĕреллĕ çĕн ĕмĕр ҫăвашĕ
Хулпуççипе кăвак пĕлте тивсе,
Кунçул уйне тухса, хĕвел тумтир тумланĕ;
Çĕн Кун ăна ыталĕ савăнса аҫашшăн,
Умне, çĕн çул çине, çĕн ҫеҫексем ҫĕртсе,
Интернатсионал кĕперĕ анĕ.



**Çĕмĕрлĕри ђукунçул стантси çывăхĕнђи компинат вырăнĕ.** (Компинат çипђен çырпине «тĕрлĕрен» уйрăмра вула).



**Кун пек „отрета“ сăн ўкерттермесĕр кам ђунĕ ђăтас!..**

## Ӳкерҍӗксемпе паллаштарни:

1. Шухӑш—ҫав копператтивпа коллектив ҫинҍех.
2. Сакӑрвун ҫулхи стариксем те Осоавиахим уйавӗнҍе—токлат итлеҫҫӗ.
3. Йалти хыт-кукарсем коллектив уссине ӗненесшӗнех мар: курӑпӑрха, пурӑнсан курӑпӑр, тесе тӑраҫҫӗ.
4. Шупашкар урамӗсем Атӑлӑн ҫурхи шывӗнҍе ҍӑпӑл кӗреҫҫӗ.
5. Шупашкар карҍӑккисем аҍи-паҍисене хӗвел ҫине илсе тухнӑ, Атӑл илемӗпе килленеҫҫӗ.



# ҪУРХИ ҪИЛ.

Хађ йешӗрен йӑмрасене
Тулаттӑн,
Хайаррӑн турткалаттӑн тумтире.
Мана вӑрҫса
Тем каласа улаттӑн,
Тем каласах ђупаттӑн шур хире...

Ес, ҫил, мана
Пит ӑшшӑн ыталатӑн,
Хӑв пурҫӑн аллупа шӑлан пуҫран.
Усалђђӗ ес,
Ҫампа сана паллатӑп,
Ҫампа сана паллатӑп хађ куҫран.

Ес урнӑ йыт пулса
Ђупса килеттӗн,
Уй-хир, вӑрмансем урлӑ шӑхӑрса.
Килеттӗн те йӗреттӗн, йе ӳлеттӗн,
Варсем тӑрӑх ђупаттан
Ахӑрса.



Ишекре самооплошенипе кӗпер тӑваҫҫӗ.

## Ҫӑмӑр хыҫҫӑн...

Шурӑ кӑтра хурӑнсене
Хӗвел саваĭ аллипе,
Ташлаттараĭ ҫулҫисене—
Вут кустӑрма вӑйӑйипе.

Кантӑк ҫинђе йӑлтӑртатаҫ
Ылттӑн хӗвел пӗрђисем,
Пӳртҫи ҫинђен шӑпӑртатаҫ
Вӗт ҫеҫ ҫӑмӑр тумламсем.

Улӑх тӑрӑх сар ђеђексем
Шӑрӑш сапаҫ пур йенђен;
Кӑвакарђӑн кӗтӗвӗсем
Йарӑнаҫҫӗ ун ҫинђен.

Урам тулли йурӑ йантраĭ—
Тӑрантараĭ ҫырмана,
Йалтан тухса вӗҫсе кайаĭ,—
Йан-йан кайаĭ вӑрмана.

**Тумим Ил.**



Ҫураки пӗтрӗ...

Пайан каллех,
Каллех епӗр йулташлӑ:
Сана еп ыталатӑп, ес—мана...
Ей, вӑрмансем, уйсем-хирсем йӑлт ташлӑр!
Вӗт сив хӗле
Ӑсатнӑ ҫырмана.

Кулах, хӗвел,
Кулах ес те ађашшӑн,
Пур ђӗр ђун та ташлатӑр савӑнса.
Вӗт ҫуркунне ташлаĭ умра ак йашшӑн
Хавасланаĭ шур хурӑн
Авӑнсах...

Шур пӗркенђӗк пӗркенпӗ
Шурӑ ҫӗмӗрт...
Ӑҫта пӑхан:—илем, илем, илем!
Тӗнђе калаĭ ҫӗн кӗвӗ—ҫӗнӗ ҫемӗ,
Вӑл—ђеђекре!
Ӑсатнӑ сив хӗле!..

**Уйӑп Мишши.**



Шупашкар йармӑрккине...

С. Зорин.

# Макҫим Коркки револԓутсин малтанхи ҫулĕсенԏе

## Аса илнисен сыпăкĕсем

*(Йулашки)*

Май килнĕ ԏух тата Влатимĕр Иԓйиԏпа Коркки ҫинԏен калас тетĕп.

Коркки Илйиԏа «турă пек» хисеплеԏԏĕ. Влатимĕр Илйиԏ хăйне асла хунине йуратман пулсан та, Коркки—поет ăна тем вырăннех хураԏԏĕ. Иԓйиԏ ҫине ҫапла пăхнипе, вăл ăна кирлĕ таран ăнланаймасăр, ун ҫинԏен тĕрĕс мар стат̆йа ҫырса паԏĕ те, анԏах вăл стат̆йара Коркки политтĕк тĕлĕшĕнԏен Влатимĕр Иԓйиԏ ҫине мĕнле пăхни палăрмаст̆.

Иԓйиԏ ҫинԏен илтнисене вăл мамăк шыва пуҫтарнă пекех пуҫтарса пыраԏԏĕ.

— Тепĕр хут калăрха, мĕнле каларĕ вăл, калăрха тепĕр хут, теԏԏĕ вăл васкаса, ăна Иԓйиԏ сăмахĕсене каласа кăтартсан.

Политтĕк тĕлĕшĕнԏен вăл Иԓйиԏран уйрăлнă вăхăтра, икĕ тĕрлĕ шухăшласа йепле пăшăрханнине, вăл йепле асапланнине каласа пама та хĕн. Пит асапланаԏԏĕ вăл ун пирки. Йăвăрԏĕ, калама ҫук йăвăрԏԏĕ ăна вăл вăхăтра. Йаланах Иԓйиԏ патне хăйех калла килеԏԏĕ. Ахаԏтен мар ҫав.

Пĕрре Коркки Ленин ҫинԏен акă мĕскер каласа кăтартрĕ:

— Ҫынна вăл пит пысăк вырăна хурат̆,—терĕ вăл. —Вăл пуринԏен те ăслă, пуринԏен те ҫӳлте тăрат̆, ҫӳлтен ҫынсене пуринԏен аван курса тăрат̆. Йепле тата ҫынсене пулăшат̆, йепле ҫыншăн тăрăшма пултарат̆! Тĕлĕнмелле. Епĕ хам куртăм. Лонтăнри сйес вăхăтĕнԏе епĕ пĕрре ԏирлерĕм. Ĕҫленĕ вăхăтра та Иԓйиԏ ман пата, епĕ йепле выртнине пĕлме темиҫе хут ԏупса пырса кайрĕ. Ман простăне пĕрмайах хыпалат̆. Мĕн тума хыпалат̆ха ку, тесе шухăшлатăп. Вăл хваттер нӳрлĕ маррине пĕлесшĕн пулнă мĕн. Сйеса ҫул кăтартса пынă вăхăтра та вăл кунне темиҫе хут пырса кайма, ман отейала хыпаласа пăхма ӳркенместԏĕ.

Корккипе калаҫнă хыҫҫăн нумай та вăхăт иртмерĕ, Иԓйиԏ манран Питĕрти ĕҫсем, унти ҫынсем ҫинԏен ыйтма тытăнԏĕ.

Ыйту хыҫҫăн ыйту парат̆. Мана тӳррипе, тĕрĕссипе калаттарԏĕ. Унтан Коркки ҫинԏен хал ыйтма тытăнԏĕ.

Епĕ калама тытăнтăм. Корккийе мухтанă хыҫҫăн епĕ тата пĕр йапала ҫинԏен каласа патăм. Пĕрре епĕр А. М-па Окт̆апĕр уйавĕнԏе массăллă инстсенировкка куртăмăр, унта А. М. мăшкăласа тунă пуршуй кĕлеткине курсан, ахăлтатса кулса йаԏĕ. Мана айакран тĕртсе калат̆:

— Пуршуйне пăхха, пуршуйне! Мĕнле тунă, е? Ну тунă та, шуйттансем!.. Ҫак вырăна ҫитиԏԏен Иԓйиԏ кулкаласа итлерĕ те, сасартăк ыйтрĕ:

— Корккийе хăш таран шанатăр есĕр?—терĕ.

Епĕ ăнланаймарăм.

— Политтĕк ĕҫĕнԏе миҫе проԏԏăнлăх шанма пулат̆ ăна?—тесе ăнланмалла сăмахсемпе ыйтрĕ манран Иԓйиԏ.

Сасартăк епĕ А. М-шăн куԏанса кайрăм. Коркки мĕн ԏул тăрăшнине (хăйшĕн мар, ытти ҫынсемшĕн тăрăшнине) аса илтĕм те, тата унăн тĕрлĕ ыйтусем пирки вырăнлă шухăшĕсене аса илсе епĕ шухăшларăм та каларăм:

— Алă проԏԏăнлăх шанма йурат̆.

Иԓйиԏ ахăлтатса кулса йаԏĕ:

— Алă проԏԏăнлăх! Е-ех айван таҫке есĕ... Ун ԏул шанма йурат̆и?.. Ытла та мар, кайа та мар—вунпилĕк проԏԏăн!

Кайран темле епĕ ҫакăн ҫинԏен Корккийе каласа кăтартрăм. Кусĕсем унăн ҫуталса кайрĕҫ. Иԓйиԏ ҫинԏен калаҫнă вăхăтра йалан ҫапла вăл:

— Вăт пуҫ тăк пуҫ! Пур ĕҫре те унăн хăйĕн шуԏĕ пур. Вăл тĕрĕс те калат̆и тен?—тесе хуԏĕ.

Вăл тĕрĕсне те тĕрĕсԏĕ ҫав. Епĕ ăна миҫе проԏԏăн шанмаллине шутласа пăхман. Анԏах вăл камшăн та пулин тăрăшса ăна вилĕмрен ҫăлса хăварнă хыҫҫăн, йе тата вăл пĕр ăста вĕреннĕ ҫынна шанса мĕнле те пулин вырăна хунă хыҫҫăн, лешĕ пирĕн влаҫа хирĕҫ тăнипе сиссен, ԏас-ԏасах А. М. ҫиленсе ҫапла калаԏԏĕ вара:

— Усал, мошшеннĕк пулԏĕ ку, хăвалăр ăна, тапса сирпĕтĕр ăна, мура,—теԏԏĕ вара.

---

Вăрҫă вăхăтĕнԏе Коркки ниҫта кайса кĕме пĕлмесԏĕ, пит пăшăрханаԏԏĕ. Ԏăнахах та А. М. ĕҫшĕн ӳксе вилекенсклер, хăйшĕн те, ыттисемшĕн те пикенсе ĕҫлекенскер, ĕҫе йуратса, ăна тем вырăнне хураканскер, малашнехи пурнăҫра ĕҫ саванăҫла пуласса ԏĕререн шанаканскер, тĕнԏере мĕн пур, пурте ĕҫрен килет тесе шутлаканскер, вăл вăрҫа тем пек кураймаст̆, ăна вăл ҫынсен айăпĕ ҫеҫ мар, нимĕне йурăхсăр усал йапала, тет.

— Йеплеха вăл апла? Ĕмĕртен ĕмĕре, ĕлĕкренпе пуҫтарнă кирлĕ йапаласене ҫĕмĕрсе тăкма йурат̆и? Ĕҫи вăл? Вăйланса пырас ĕҫе тата темиҫе теҫетке ҫула ԏарса, путарса лартма йурат̆и? Ҫук апла йурамаст̆,—тесе шухăшланă вăл хăй ăшĕнԏе.

Ҫавăнпах та вăл «вăрҫă» сăмаха «ҫапăҫу» теԏԏĕ. Епĕ ун ҫинԏен пĕр хут ҫеҫ каламан ăна. Мĕншĕн «вăрҫă» сăмах вырăнне «ҫапăҫу» тепĕха вăл? Вăрҫă ҫав тери курайманнипе, ун усаллăхне кăтартасшăн, авантарах систересшĕн пулнă вăл „ҫапăҫу“ сăмахпа.

Вăрҫа йуратманнипе вăл пирĕн краштăн вăрҫине те иккĕленсе пăхаԏԏĕ; йăнăшсем пуласран хăраԏԏĕ пулмалла.

Анԏах пыра-киле иккĕллĕ шухăшлас вăхăт иртрĕ те, пĕрре унăн Питĕртен инҫе мар тăракан Хĕрлĕ ҫарти парттире тăман салтаксен пысăк конференсийĕнԏе сăмах тухса каламалла пулԏĕ.

Вăл вăхăт пит йăвăр вăхăтԏĕ. Ун ԏух ҫамрăк Хĕрлĕ ҫар выҫăпа та, тумтирсĕр те аптранă, тифпала та кĕрешмелле пулнă, тăшмансем ăна хыпса-ҫăтса йарас пек тăнă, вĕсене хирĕҫ наступленийе каймалла пулнă. Ĕҫе лайăх туса пырсан та, ҫарта ӳпкелешни илтĕнкелеԏԏĕ. Ун ԏухне вăл ҫитменлĕхсене пурне те пĕтерме кирлĕ пулнă. Малта асăннă конференсине ҫав тĕлĕшпе пухнă пулнă. Анԏах преҫитиума пĕр комуниста та суйламан. Ԏунра, ԏĕрере мĕн пурне, урăхла каласан, армири ҫитменлĕхсене пурне те каласа кăтартнă унта. Малалла мĕскер?

Малалла конференсийе Коркки пыԏĕ те, красноармейтсăсене ҫапла сăмах каларĕ:

— Епĕ, йулташсем, нумай калаçма пултараймастăп: епĕ ораттăр мар. Анҫах вăрçă сире йăлăхтарнă тенине илтрĕм. Вăрçа епĕ те йуратса каймастăп. Сиртен те ытла йуратмастăпи тен. Анҫах мĕн тăвасха? Вăрçа каймасан, тăшмансем сирĕн пуçăрсене пăрса пăрахаççĕ. Каларĕ, тейĕр акă, пăрса пăрахаççĕ Шухăшлăрха: мĕн-мĕн турăр есĕр? Патшана ӳкертĕр, сирпĕтрĕр, çĕре туртса илтĕр, фапрăкпа панк хуçисене хăваласа йатăр... Çак ĕçсемшĕн сире тăшмансем пуçран çеç шăлса тăмĕç вĕт!

...Тата епĕ сирĕн хушăрта йеврейсем çинҫен аван мар калаçнине илтрĕм. Апла йурамасҭ. Ку пĕртте килĕшӳллĕ мар. Йеврейсем ăслă, хастарлă халăх, çавăнпа вĕсенҫен пысăк вырăнта ларакансем пур. Есĕр те ăслăланăр, хастарлăланăр, вара сире те пысăк вырăна суйласа лартĕç.

...Хаҫ ĕнтĕ сире ырă сунатăп, тăрăшса ĕçлеме сĕнетĕп...

Ҫулхула ҫĕлхипе „Хаҫхи ĕçсем“ çинҫен çапла çеç каласа паҫĕ Коркки. Епĕ итлекенсем çине тилмĕрсе пăхса ларатăп—Коркки сăмахĕсем пит вырăнлă пулҫĕç. Вăл ăнланмалла ҫĕлхепе, ҫĕререн каланисем итлекенсен ҫĕри патнех кĕрсе ларҫĕç. Коркки „епĕ ораттăр мар, калаçма пултараймастăп“ тенĕ пулсан та, унăн сăмахĕ тĕплĕ, лайăх ораттăрсеннинҫен те аван тухрĕ.

---

Пĕрре А. М. ҫăн-ҫăн ораттăр пекех калаçрĕ. Ку ĕç 1920-мĕш çулта поҫаксем пирĕн çине килнĕ вăхăтра пулҫĕ. Унҫен малтан та, кайарахпа та, нихăçан та епĕ Коркки çапла хитре каланине илтмен. Трипун*) пулҫĕ вăл çав вăхăтра.

Невски урамĕнҫе вăрçа кайма тухнă комуниссемпе вĕсене ăсатакансем пинлĕ халăх пухăннă.

Палккон çинҫен Невски урамĕ тăрăх А. М. сасси—йан кайаҭ:

— Поҫшă шҫахти çакна астутăр «Раççейпе Украйнăн ĕçлекен халăхĕ Поҫшă улпуҫĕсем вĕсене хĕсĕрленине пĕртте манман. Пирĕнпе ан çыхланҫăр вĕсем, епĕр вĕсене ĕлĕкхисене те астутарма пултаратпăр»!..

Çак сăмахсене вăл çав терп хăватлă, аллисене сулкаласа каларĕ. Ораттăр искуствине хака хуракан çын илтнĕ пулсан, вăл çын Коркки сăмахĕсенҫен тĕлĕннĕ пулĕҫĕ.

— Епĕ вăрçа ырламастăп — йан кайаҭ А. М. сасси, епĕ вăрçăшăн тесе никам та калаймĕ. Анҫах епĕр поҫшă панĕсене*) пире канăç пама хушатпăр.

Ку красноармăйтсăсен конферентсинҫе каланă сăмах мар. Кунта „**сирĕн** пуçăрсене“ темест, „**епĕр** вĕсен пуçĕсене сӳтсе илĕпĕр“ тет. Унҫух вăл пуринҫен те аван каларĕ. Мĕн калаттарнă ăна çак сăмахсене! Исеркиҫ**) карҫăк каланине аса илни ĕнтĕ вăл, йе Кокăҫ Остапĕн «Илтетĕп атте» тенĕ сасси ку, йе тата пуршуаçипе помешҫĕксене пĕтерме хушакан клас сисĕмĕи? Ман шутпа, кунта пур те пур. Пĕртен пĕр хут çавăн ҫух Коркки хытă сасăпа кăшкăрнине илтрĕм. Вăл ахаҫ кăшкăрни çеç пулмарĕ, çук, унта „çилĕллĕ вăй, хастарлăх çулăмĕ“ паларҫĕ.

---

Питĕрте пит салхуллă кунсем. Йутенĕҫ çарĕ Питĕр хулине сыхлакан йулашки вырăна — ҫикĕне (Пулково тăвĕ) патне çитнĕ. Кашни мăн çул тăрăх хуланалла çынсем тараççĕ. Ăçта çитнĕ унта лавсем умлă-хыçлă тăсăлнă. Тата кайалла ҫакма вырăн та çук. Халĕ вăл кивĕ хутсем хушшинҫе тивиçи командтирĕн: «Тивиçи штапĕ Тетско-çеҫски йатлă ваксала килсе çитрĕ» тесе çырнă раппăртне хăрамасăрах вулатăп. Унҫух вăл сăмахсем ҫĕрене çурса антараҫҫĕç. Тупăсем кĕрĕслетни хуларан пит хытă илтĕнеҫҫĕ. Кашни сехетрех, пире тăшман Мускавран уйăраҭ, тесе хăраса тăраттăмăр. Хĕрлĕ Питĕр тăрса йулĕши, çукши? — тесе шухăшлаттăмăр.

Коркки ҫирленĕ. Ирхине ирех епĕ ăна пĕр-ик сехетрен кайакан пойĕспа Мускава ӳкĕтлесе йама кĕтĕм. Пырсанах çавăн çинҫен сăмах хускатса йатăм.

— Каймастăп!—тесе хуҫĕ мана хирĕç А. М.

— Йепле каймастăр пулаҭ? Партти сире кайма хушаҭ.

— Каймастăп.

— Есĕр ҫирлĕ вĕт. Ҫирлĕ пуçăн йепле йулма пултаратăрха?

— Каймастăп.

— Хулана пайанлă-ыранлă Йутенĕҫ панти килсе кĕме пултараҭ. Есĕр ун çинҫен пĕлместĕр пулас? Есĕр хăвăр та, йулнă çынсемпе вĕсем мĕн тунине пĕлетĕр пуҫ?

— Çук, каймастăп!—тенине илтрĕм епĕ çĕнĕрен.

Ман аллăмсем усăнҫĕç. Епĕ Коркки çине тĕлĕнсе пăхатăп, нимĕн те ăнланаймастăп. Вăл куçĕсене манран тартаҭ, ҫӳреҫерен пăхасшăн. Тулта кĕрхи кун салхуллă, нӳрлĕ. Иксĕмĕр те ҫĕнместпĕр. Йулашкинҫен А. М. ҫӳреҫерен куçне илҫĕ те, куçне тутăрпа шăлса каларĕ:

— Епĕ, пĕлессĕр килсен, Питĕре йулма шутларăм. Сире пулăшма, сире, кирлĕ вăхăтра, пытарма йуласшăн епĕ. Ман пĕлекен çынсем нумай, епĕ сире вăрттăнлă хваттерсем тупма пултаратăп. Унтан тата... сире тĕрмене хупсан, сирĕншĕн кам та пулсан тăрăшмаллах вĕт. Çавăн çинҫен шухăшласа пăхни есĕр?..

Çак кĕтмен сăмахсене илтсен, епĕ хирĕç калама пуçларăм:

— Пинĕ пинĕпе персе вĕлернĕ вăхăтра, шавланă хушăра сире те персе вĕлерме пултараççĕ. Мĕн килмене шухăшлатăр есĕр?—тетĕп епĕ.

— Тĕрĕс, тĕрĕс!—кресли çинҫен сиксе тăҫĕ Коркки. —Ку тата аван пулаҭ. Хĕвеланăç йенҫи халăхсене нумайăшне куçĕсене уçĕ ку. Хаҫхи вăхăтра епĕ çапла çеç усă кӳме пултаратăп сире.

Тавлашсан та усси пуласси çук. «Каймастăп» тенĕ сăмаха вăл тупăсем сасси илтĕннĕ вăхăтра та каларĕ.

Епĕр кăмăлсăр уйрăлтăмăр.

Мана алăк патнелле ăсатнă ҫух, Коркки алăк патне çитсен, сасартăк темĕскер аса илнĕ пек, ҫараҭ мана:

— Марипă Фетăровнăпа калаçса пăхма хушатăп сире. Вăл пит паттăр хĕрарăм, паррикатăра вăл арçынтан кайа мар çапăçĕ.

Анҫах, паррикатăсем пулҫĕç те, пирĕн телейшĕн, унта çапăçма тӳрĕ килмерĕ.

**Ç. Йалавин** куçарнă.

---

*) Трипун тесе халăха йуратакан, халăхшăн тăрăшакан, халăх суйласа лартнă пуçлăхсене калаççĕ.

*) Пан тесе поҫшăра улпутсене калаççĕ.

**) Исеркиҫ вăл Корккийĕн „Старуха Изергиль“ йатлă калавĕн геройĕ.

# ЛИТТЕРАТТУРĂ ШКУЛĔ

## Поеçи формисем çинђен.

**Кели.**

### II-мĕш ПАЙĔН йулашки сыпăкĕ.

Футтуриссен поеçине формă йенђен пăхса криттĕклени çинђен кайран каламалла пулат̆. Хаљ револютси хыççăн сиксе тухакан еко-футтуриссен тăванĕсем—

### Имашиниссем

çинђен каламалла. Унта **Шершеневĕђ, Мариенкоф, Йеççенĕн** т. ыт. те пуçласа ĕçлеме тытăннă. Имашиниссем—еклектĕксем: пĕр йенђен—Маринеттин «провăлкăсăр шухăшне», тепĕр йенђен, çимволиссен «сăнлăх меттăтне» илсе, вĕсем хăйсен поеçине тăваççĕ. „Имашинисăм вăл—иртнĕ пурнăçран çĕнĕ пурнăçа кĕнĕ çĕрнĕ теккатанс". Вăл сăнлăхсен çĕнĕлĕхĕшĕн тăрăшат̆, анђах ку шухăш кивĕ: епĕр вĕсемсĕр пуçнех, сăнлăх çук тĕлте поеçи те çуккине пĕлетпĕр. „Сăнлăх—хăй тĕллĕн тăракан йапала, вăл хăйех сотершани туса парат̆" теççĕ вĕсем; сăвăран—сăнлăхсен катталăкĕ, сăмах пухăвĕ параççĕ вĕсем. Шершеневĕђ шухăшĕпе: „поет çтилĕ—ăна кăна тивĕçлĕ, сăмах шăршисене йĕркелетме пĕлни". „Сăмахра икĕ пай: сотершани тата сăнлăх; çĕнĕ сăнлăх парас пулсан, çĕнĕ сăмах кирлĕ". «2×2=5» йатлă прошӳрăра Шершеневĕђ калат̆: «ăслăран ăслă сăмах мар, сăввăн маттериалĕ—сăнлăхлă сăмах пулмалла, поеçин çулĕ—сăнлăха пĕтерни мар, сăнлăх, происветенири шухăша тутарни кирлĕ» тет. Сăмахран, унăн сотершанине татса илсе, ăна сăнлăхшăн çеç сăвва кĕртмелле мар. Сăмахра 3 елемент: а) тулашĕнђи—формă—тĕрлĕ çыхăпа тĕрлĕ сăн пани; ы) шалти—формă—„Йĕс йуланăт" (Пушкĕнăн)—пысăк ĕçре пĕђĕк çыннăн телейĕ таптанни; с) сотершани—происветенири тĕп шухăш—опђĕствăпа пĕр çыннăн инттересĕсем тĕл пулăнни. Сотершанисĕр сăмах, сăнлăхсен катталăкĕ—поеçире ăсталăха, хамăра хамăр кăтартнине цĕтерет. Имашинисăм, хăйĕнђен çĕнĕрен нимĕн те шухăшласа кăларса паманнипе, шкул пулса пурăнма пултарайман, вăл 1922-мĕш çулта саланса кайат̆. Имашиниссем пире кивĕ сăнлăхсемпе пурнăç сансăпатне кăтартса парассинђен асăрханма вĕрентеççĕ. Йеççенĕн кайран хăйĕн уђиттĕлĕсенђен Мариенкофпа Шершеневĕђран уйăрăлат̆, хăйĕн хутошĕствине парат̆.

### Атамиссем—акмаиссем.

Вăрçăђђен, еко-футтуриссемпе пĕр вăхăтрах, атамиссем—акмеиссем сиксе тухаççĕ. Унта Кумиљов, Коротетски, Мантељштам, Ахматтăвă кĕреççĕ. «Çимволисăм вырăнне урăх йухăм килет—хут̆те мĕнле йат хурăр: акмеисăм (акми, крекла; пĕр-пĕр йапалан ђи çӳлĕ карђĕ), атамисăм (пурнăç çине хăрамасăр, тăрă куçпа пăхни), тет Кумиљов. Вĕсем хăйсене çимволиссен ађисем, вĕсен ĕçĕсене тăсакансем, теççĕ. „Пире: Шекспир—çыннăн ђун тĕнђине, Рапле—çын ӳтне, çын хавасне, ăсласа тунă станне, Виллон—пурне те туйакан пурнăça, çынна, турăпа пăсăка, вилĕмпе вилĕмсĕрлĕхе, Теоффил Котйе—çак пурнăçшăн ăсталăхра кирлĕ тума—тупса пађĕç", тет Кумиљов. Вĕсемшĕн поеçипе тĕн—пĕр укçаннах икĕ йенĕ. Вĕсем „меттр" тăллине çĕмĕресшĕн, поеçире сас карђĕсене сиктерсе хăварасшăн, утаренисене выђанђăклă тăвасшăн, çилапĕккăна пурнăçтарасшăн" пулнă. Вĕсемшĕн сăмахăн тирпейлĕхĕ—сăввăн какайĕ. Еко-футтуриссем—сăмах ăстисем, кусем—йапала ăстисем. Поеçире вĕсем мусăккăллăх вырăнне хутошĕствă, пластĕккă (ђĕрђунсăр йапаласене тăмпа формăласси), архитекттурă (çурт-йĕр тумалли ăсталăх) туса параççĕ. Вĕсем куçа çиçĕнтерекен, тӳрĕ, ђас куçа курăнакан формăсене йуратаççĕ. Кĕвĕллĕ сăвăсем вырăнне пурнăçра курăнакан йапаласене формăласа параççĕ, куçакан пурнăça мар, вилĕ, ђунсăр тĕнђене сăнсăпатлаççĕ. Еко-футтуриссен сăввисем пекех, кусем те пире ђĕресене кайса тивекен йапаласем параççĕ. Ахматтăвăн, ђăнах та, хĕрарăм шухăшне кăтарткалакан сăввисем пур, вĕсем илемлĕ, йăнăша сасăпа çырнă. Пур акмеиссем те йапаласене аван сăнлăхсемпе сăнсăпатлаççĕ:

> Хăмла çырли майлă хĕвел
> Лапсăрка кăвак тĕтĕм çийĕнђе
> (Ахматтăвă).
>
> Илтетни есĕ—сив çырма
> Сассăр шывпа йурланине?
> Ђупат̆ вăл ирĕк йухăмпа.
> Нихçан туймаст̆ ывăннине.
> (Коротетски).

Вĕсен пур сăввисенђен те çакăн пек капăç, вилĕм, сивĕллĕх илтĕнет, мĕншĕн тесен вĕсем промышлĕннăç пуршуаçийĕн пурнăçĕ çĕкленнĕ ђухне пуршуа хуçшинђен тухнă текатентсемех. Вĕсен шкулĕ те ђăн пурнăçăн туйăвĕнђен, йухăмĕнђен айакра тăрса ĕçленипе нумайа пырайман, 17—21 ç. ç. вĕсен шкулĕ пĕтсе ларат̆. Кумиљовпа Коротетски йут патшалăха кайаççĕ, Мантељштам—çуралакан çĕнклаççĕксен йенне тăрса, вĕсене йертсе пырат̆. Вĕсен хыççăнхи çĕнĕ шкул—футтуриссен „ăсталăхăн сулахай фронђĕ" (Левый фронт искуства, Лев) 1923 çулта формăшăн кĕрешме пуçлат̆.

### Пролеттар поеђĕсен формисем.

Револютси хыççăнхи поеçи револютсийĕн сăнсăпатне хăйне йевĕрлĕ формăпа кăтартса панă, анђах пролеттар поеђĕсен хăйсен формисем çук. Ку тĕлĕшпе вĕсен малтанхи вăхăтра ирĕксĕрех еклектĕк (пурнăç таппипе килĕштерекен формăсене çыхăнтармалла) пулнă. Тĕрлĕ формăсемпе çырса, вĕсем çапах та револютси сăнсăпатне кăтартма пултарнă. Темле хутошнĕк те малтанхи вăхăтра урăх хутошнĕкĕн формисене йышăнат̆, кайрантарах хăйĕн формине парат̆. Кивĕ формăсемпе çырнă пулсан та револютси поеђĕсем, вăхăтлăха та пулин „револютси çтилне" туса панă. Ђи пысăк вырăнта çимволиссен Верхарăн, Уитмен—формисем тăраççĕ. Вĕсен формисемпе нумай поетсем усă курнă, мĕншĕн тесен вĕсем, сăвă, мусăккă, поеçи меттăђĕ, сăмах çаврăнăçĕ тĕлĕшĕпе нумай ĕçленĕ. Хресђен поеђĕсем: **Фомин, Клыђков, Кљуйĕв, Ширейĕв, Йеççенĕн, Карпăв, Орешшĕн, Тисленкко**—Коњтсов поеçине çĕнетсе параççĕ. **Кераççимăв** хăш-хăш тĕлте имашиниссен хăпарса тăракан сăнлăхĕсемпе çырат̆. **Каçтĕв**—поеçи технĕкки тĕлĕшĕпе ĕçлесе, «конструктивис» пулас тесе

тăрăшкалаҫ. **Каҫĕн** — акменссем йеверлĕ, ҫунсăр йапаласене проносвотсвăпа ҫыхăнтарасшăн тăрăшаҫ. **Сатофйĕв**—Еткар По манерлĕ риттăм улшăнăвĕпе, саспаллисене ҫеретлентерсе тĕрлĕ карттинсем параҫ. **Самопытнĕк** — кивĕ формăсемпе (Плок, Пелăй) усă кураҫ. Пуринҫен ытла кунта Верххарăнпа Уот Унтлинăн «ирĕк сăвви» патне туртăнни паллă.

Рапоҫҫисем хушшинҫен тухнă поетсем ҫитĕнĕҫсемĕн ирĕк сăввăн ритмипе килĕшеҫҫĕ. Майакковски пек те ҫыркалаҫҫĕ.

**Каҫтĕфпа Сатофйĕв** Амерĕкри темократти поеҫĕн Уеҫт Уитменăн кĕввипе ҫыраҫҫĕ. «Ирĕк сăвă» теорине Потлĕр туса панă, Емил Верххарн — Пеҫки поеҫĕ, пуринҫен малтан вăл сăвва пурнăҫа кĕртнĕ. Вăл ирĕк сăвăран „ҫн малтан мусăккă, мусăккă, мусăккă кирлĕ“, тет. Ҫăпах та, ку сăвăпа ĕрĕхекен пурнăҫăн йĕркесĕр таппине, тусана, революҫсине, хула пурнăҫне пит аван сăнлама пулаҫ, вăл сăввăн ăшне тарăн шухăш, мусăккă кĕртмелле—вара тин унпа поеҫи илемленет. Пурнăҫра риттăм нумай, вĕсене авалхи формăсемпех сăнласа параймалла мар, пирĕн пурнăҫ сотершанийĕ хăйне тивĕҫлĕ формăпа пĕркенĕ. Ҫавна кура хаҫхи вăхăтра, нео (ҫенĕ) класҫĕк Мантеҫштам (ĕнĕк-акменс): **Револҫутси ăсталăхĕ—класҫĕксен ăсталăхĕ,** тесе, класҫĕксен форми ҫине куҫаҫ. Ыттисем те нумайĕшĕ ун хыҫҫăн унталла кайрĕҫ.

### Ҫеркей Йеҫҫенĕн.

Йулашки вăхăтра пирĕн поетсем Йеҫҫенĕнпа, Майакковскипе тата Песыменскиҫе пит инттересленеҫҫĕ, ҫавăнпа епĕ вĕсем ҫинҫен, вĕсен формисем ҫинҫен каласшăн. Йеҫҫенĕн форми ҫимволиссенҫен пуҫланса кайаҫ, Маринетти, Майакковски, Шершеневĕҫ формисемпе нимĕнле ҫыхăнса та тăмаҫ. Шершеневĕҫпа Мариенкофăн формисем — футтуриссен формине урăхлатни, Йеҫҫенĕнăн имашинисăмĕ — ҫимволиссен урăхлалатнă форми. Ҫимволиссен форми — ҫăн пурнăҫран таталса шухăшланипе пулаҫ. Йеҫҫенĕн хăйĕн ҫимволĕсене, сăнлăхĕсене халăх творҫĕствинҫен илет. Ытти имашиниссем пек Йеҫҫенĕн сăнлăх ҫине сăнлăх утлантарса ҫырмаҫ, ун сăнлахĕсем, йуптарăвĕсем вырăнлă пулаҫҫĕ. Вăл сăнлăх пама пултарайман кивелнĕ сăмахсене пăрахасшăн тапаланнă, ҫĕнĕ сăнлăх-сăмах тупасшăн тăрăшнă. Йеҫҫенĕн пурнăҫĕнҫе икĕ сыпăк: пĕремĕш—революҫсиҫҫенхи; вăл ун ҫухне хресҫен шухăшĕсене миҫтĕк пек кăтартса параҫ, хăй те турра ĕненет, йăваш пурăнаҫ; иккĕмĕш — вăл революҫсине тĕл пулаҫ, „Хупахлă Мускава“ куҫаҫ, вара ĕненме те пăрахаҫ, хресҫен революҫсине мĕнле тĕл пулнине кăтартаҫ. Ун поеҫийĕнҫе иккĕленҫĕклĕх курăнаҫ, мĕншĕн тесен хресҫен те, вĕтпуршуа пек, икĕ кăмăллă. „Йеҫҫенĕн ҫиркўлĕхрен маттериалисăм патне мар, пантеисăмпа (ҫут-ҫанталăка пуҫҫапни) йасыҫнĕк патне куҫнă“. (Воронски. «Красная новь» 24 ҫ.). Йалтан хулана куҫнипе Йеҫҫенĕн хресҫен хушшинҫен те уйарлаҫ, пролеттарсен итеолокине те ăнланса ҫитерейместь. Ҫавăнпа вăл «хуликана» тухса, кăмăл хирĕҫĕвĕсене татайманнипе пĕтет. Унăн сăввисем формă йенҫен питĕ ҫаплă, вăл вĕсене вăйлă хутошĕстăллă формăпа кипкелет.

Вăл хăйĕн сăввисене „таплаштару меттăҫĕпе“ ҫыраҫ. Хаҫхи ҫамрăксем хушшинҫе Йеҫҫенĕн йеверлĕ, ун сăнлăхĕсене, ун шухăшĕсене илсе ҫыракансем нумай: «каҫ кушак пек йăпшăнса пыраҫ» „Епĕ—хуликан“ теҫҫĕ. Йеҫҫенĕнпа пĕрле.

### Песыменскăй

те пирĕн ҫамрăк поетсене пултаруллăх тĕлĕшпе хавхалантарса тăраҫ. Песыменскăй Майакковскăй формисем урлă хăйне кăна тивĕҫлĕ формă тума тытăнаҫ. Унăн пултарăхĕ ҫине имашиниссен сăнлăхĕ, пĕр пулмалла пултаруллăхăн сăнлăхне пăсса вĕт сăнлăхсене тĕплĕленни те — паллă хăвараҫ. Песыменскăй хăйĕн сăввисенҫе пур формăсене те, сотершани тивĕҫĕпе килĕштерсе пурнăҫтараҫ: вăл класҫĕксен меттăрĕсене те, улшăнакан меттр-риттăмсене те, ирĕк сăвăра йухăнса пыракан риттăмсене те пит ăсталаса усă кураҫ. Акă унта ҫак сăвă сыпăкĕнҫе ҫамрăкăн кăмăлĕ, савнăҫĕ, ташă, купăс калани—аллиттератсипе ҫырчă пирки пит аван илтĕнет („н“ сасă ҫеретленет):

| | |
|---|---|
| Перепапки-перебранки, | Где вам тонким перегонки |
| Смех и снег летят в глаза, | С гулким гонком крикунов, |
| Эх, тальянки д медны д бланки, | Миру рвем мы перепонки |
| Тонки звонки голоса | Громким звоном буйных слов... |

Йе тата:

| | |
|---|---|
| Стукай, стукай | Стукай, стукай |
| многорукий | Стукай, ткн... |

Тĕрлĕ хăйĕн мар, кивҫен илнĕ формăсемпе те пулин, вăл ҫамрăксен ҫун хавалне, шанăҫне, хуйхă-суйхине пит аван кăтартаҫ. Хаҫхи вăхăтра вăл класҫĕксен форми ҫинҫен пĕтĕмпех куҫаҫ, реалисăма пурнăҫтараҫ.

## ЛИТТЕРАТТУРĂ ХРОНĔККИ

### Йотĕрне Петтохнĕккăмĕнҫи литкрушокра.

Ĕҫсем хуллентех ăнса пыраҫҫĕ. Ку таранҫҫен плансăрах ĕҫлекелесе пынă, анҫах йулашки суйлавсенҫен ҫирĕп ĕҫ планĕ тунă. Хаҫхи вăхăтра крушокра ҫăваш литтераттурине вĕренес тĕлĕшпе ĕҫлеҫҫĕ. Нумай пулмаҫ Елкер пулталуллăхне тишкерсе тухнă. Ҫитес пухусенҫе Рсай, Шупуҫҫынни творҫĕствисене тишкерме тытăнаҫҫĕ. Ҫăваш пиҫеҫĕн 10-суллăхĕнҫе литкрушок литтераттурă каҫĕ туса ирттерҫĕ. Пиҫет кунĕ патне хаҫ каллех хатĕрленеҫҫĕ. Крушок литтераттурă шурналĕ кăларса тăраҫ. Ку таранҫҫен вăл «Хĕрлĕ Йалав» йатлăҫҫĕ, халĕ йатне «Пирĕн Вăй» турĕҫ. Йулашки №-сем малтанхинҫен аванлансах пыраҫҫĕ. Крушокра литтераттурă ĕҫĕпе питĕ хытă инттересленекенсем пур. Пысăк йапаласемех ҫырма тытăнаҫҫĕ. **Л. Акаккăв.**

### Кашара.

Каша йалĕнҫе (Уҫйанăвск у.) литтераттурă крушокĕ уҫăлнăранпа ҫур ҫул анҫах. Крушокра 12 сын, вĕсенҫен пĕри хĕраҫа. Крушок пухăвĕсене ҫленсем тăрăшсах ҫўреҫҫĕ. Пухусенҫе тĕрлĕ, ҫленра тăракансен, сăвă-калавĕсене вуласа тухса хамăр пĕлнĕ пек тўрлетнĕ. Аванлантарах сăвă-калавсене пиҫете пама хатĕрленĕ. Ҫакăн пек токлатсем туса панă: 1) Ҫăваш илемлĕ литтераттурĕ кунҫулĕнҫен; 2) Ҫăвашсен революҫсиҫҫенхипе хаҫхи литтераттури; 3) Писаттĕлсем хушшинҫи йухăмсем; 4) Мĕн тума кирлĕ илемлĕ литтераттурă. Кусемсĕр пуҫне тата вак калаҫусем те туса ирттернĕ. Паллăрах писаттĕлсемпе поетсен проиосветенисене тишкерсе тухнă. «Окăапĕр Парни» йатлă аҫманах кăларма йышăннă. Маттериалсем хатĕр, кăлармалла ҫех. **Йехрим Иванĕ.**

# Чăваш фото-кино






**„ЙАЛ“ йатлă кино-карттинăран**

1. **Ђухăн хĕрĕ** (Шупашкарти Комунă шкулĕнђе вĕренекен, 12 ç.).
2. **Салтак—Парне** (ђăваш арттисĕ).
3. **Çăмарта хуçи—Ваççилйĕв** (ђăваш арттисĕ).
4. **Шурквартейăтс—Потваљнăй** (Ленинкратран).
5. **Ађа-пăђа вăйăра.**
6. **Инке** (йалти хĕрарăм выђаҍ).
7. **Йашçын** (йалтанах).
8. **Сушђĕк—Макçимăв-Кошкински.**
9. **Тĕл пулђĕç—Тани-Йун, Потваљнăй** тата **Капралăв.**

# КРИТТĔК ПАЙĔ

## Йалавинăн „Литтераттурăллă саметкисем“ пирки.

### Ăшĕ-и, йе тулашĕ?

Литтераттурăра ку ыйту çĕнĕ ыйту мар, ун çинђен совет литтераттури пуçланнăранпа нумай калаçнă, нумай çырнă та, ун пиркийех тата писсаттĕлсем хушшинђе тĕрлĕ круппăсем, школăсем т. ыт. пĕрлешӳсем пулаççĕ те, пулнă та, пулса пĕтколенĕ те. Пĕр сăмахпа каласан, ку ыйтăва епир халиђђен ђылай тĕл пулкаланă, çавăнпа ăна палласа çитнĕ тесен те йăнăш пулас çук.

Сотершанипе формă литтераттурăра мĕнле вырăн йышăнса тăмалли çинђен пирĕн ђăваш литтераттурĕнђе халиђђен тавлашусемех çук. Епĕр пурте, пуринђен ытла проллеттари писсаттĕлĕсем, вăл тĕлĕшрен пĕр шухăшлă: хутошĕствăллă происветенире ђи малтан лайăх сотершани пултăр, ун хыççăн тин лайăх сотершанине килĕшӳллĕ лайăх формă пултăр. Ђи лайăх происветени, тесе епĕр сотершанипе формăна ђи килĕшӳллĕ, ђи çыпăçуллă çыхăнтарнă происветенийе калатпăр.

Хутошĕствăллă происветенин тĕп ыйтăвĕсене çакăн пек ăнланни вăл пĕрре те ăнсăртран пырса çапăннă йапала мар. Вăл маркçисăмăн тĕп никĕсĕсенђен тухса пырать.

Йаккăвлĕв (Йалавин), «Канашпа» «Сунтал» шурнала ђылай çыркаланă писаттĕл, ку тĕлĕшрен пăртак урăхларах шухăшлать пулмалла. Тĕрĕссипе каласан, урăхла мар, шухăшласа çитерейместь темелле. Вăл нийепле те хутошĕствăллă происветенире сотершанипе формă мĕнле çыхăнса тăмаллине ăнланасшăн мар. Ун шухăшĕпе хутошĕствăллă происветеннин пахалăхне шыранă ђух малтан пĕр йенђеп тишкерсе тухас пулать (итеолоки йе техникка), унтан тепĕр йенђен (технĕккă йе итеолоки). Пăхса тухнă происветенин хăш йенђе те пулсан кăшт çитменлĕх пулсан, вара çав происветени ниме йурăхсăр происветени пулать. Йалавинăн тĕп шухăшĕ, паллах, пит пархатарлă шухăш—пур йенђен те пĕр айăпсăр происветени тупасси вăл пирĕн ĕмĕт. Анђах хађхи вăхăтра ун пек происветенисем пулма пултарас çуккине аса илсен (мĕншĕн тесен хађхи вăхăт пирĕн формă шыранă вăхăт кăна халĕ) Йалавин шухăшĕ пĕтĕм литтераттурă çине киђем сăнĕ çапма пултарать.

Йалавин Алентейпе Ваçанккан спорнĕкĕсене тишкĕрет („Сунталăн“ 4-мĕш №-рĕ). Вăл спорнĕксене пикам та халиђђен ђăваш литтераттурĕнђе ђи лайăх йапаласем тесе каламан, мĕншĕн тесен вĕсенђе айăп пуррисене пурте пĕлеççĕ. Анђах ниме йурăхсăр йапаласем тесе те каламан, мĕншĕн тесен, вĕсенђе çитменлĕхсем пур пулсан та, усси пурах. Анђах Йалавин хăйĕн «Литтераттурăллă саметкăсем» йатлă статйинђе асăннă спорнĕксене йăлтах йурăхсăра кăларать. Мĕншĕн? Мĕншĕн тесен вĕсенђе формă тĕлĕшĕнђен айăпсем пур.

Кунта, пуринђен ытла, Йалавинăн локиккă интереслĕ. Вăл çапла шухăшлать. (Хăй сăмахĕсенех илсе кăтартатпăр):

**Сотершани йенђен:** «Итеолоки йенђен тиркеме çуках ĕнтĕ», «сăввин сотершанийĕ пур», „вăл тĕлĕшрен тиркемеллийех çук“ т. ыт.те.

**Формă йенђен:** ритмă çук, рифмă çук, „ритмă кăна мар, рифмине те тупма май çук“, «рифмă тавраш йĕрсе шырасан та тупас çук» т. ыт. те.

**Вывăт:** „епĕ кунта çамрăксене усă памалли пит нумайах мар пулĕ, тетĕп“, „çамрăксем вађђи паха вырăнсем тупаймăн“, «тӳррипе каласан унта çамрăксене вĕренмелли нимĕн те çук», «Ваçанккан урăх сăввисем пулмасан», унтан ĕретлĕ сăвăçă пулас çук» т. ыт. те.

Епĕр кунта Алентейпе Ваçанкка сăввисенђе рифмăпа ритмă пурри-çукки çинђен калаçмăпăр, вĕсене пирĕн шухăшпа «йĕрсех» шырамалла мар пек, вĕсем пурах, анђах çав хушăрах çитменлĕхсем те пур. Пире кунта пуринђен ытла Иалавин шухăшĕн çиçтеми интересленterет. Йалавин çапла шухăшлать:

**1-мĕш полошени:** Формă лайăх пулсан анђах происветени усăллă.

**2-мĕш полошени:** Ку происветенин форми нађар.

**Вывăт:** Çавăнпа та ку происветени ниме йурăхсăр.

Ку вывăтра тĕрĕсси те пур, мĕншĕн тесен, ђăнах та, хутошĕствăллă происветенин форми нађар пулсан ăна илемлĕ происветенисем хушшине кĕртме йăвăр. Анђах литтераттурă ыйтăвĕсене Йалавин пек татса пани ниме те йурăхсăр, мĕншĕн тесен ку тĕлте Йалавин локиккинђен происветенин сотершанийĕ йăлтах тухса ӳкет.

Çак çиçтемăпа пырсах Йалавин Виктăрăв спорнĕкне те йурахсăра кăларать. Анђах кунта вăл «кĕрĕкне тепĕр май тавăрса тăхăнать».

**1-мĕш полошени:** Сотершани лайăх пулсан анђах происветени усăллă.

**2-мĕш полошени:** Ку происветенин сотершанийĕ çителĕклех мар.

**Вывăт:** Çавăнпа ку происветенин усси сахал.

Ку вывăтра та тĕрĕсси пур, мĕншĕн тесен происветенире сотершани мĕн ђул аслăрах, мĕн ђул тарăнрах, çавăн ђул происветенин пахалăхĕ те пысăкрах пулма пултарать. Анђах хутошĕствăллă происветенине пĕр йенђен анђах пахалани каллех ниме йурăхсăр, мĕншĕн тесен происветени, сотершани йенђен çителĕхсĕр (сийенлĕ мар) пулсан та, унăн форми лайăх пулсан, çамрăк поетсене технĕккă тĕлĕшĕнђен питĕ нумай усă пама пултарать. Кунта каллех Йалавин локиккинђен формă тухса ӳкнине куратпăр.

Çакăн пек ĕнтĕ Йалавинăн локикки. Паллах, ку хађхи тиалектĕклă çиçтемă мар, метафиçĕклă çиçтемă. Çак çиçтемăпа шухăшлани Йалавина икĕ йăнăш çулпа илсе кайать: пĕри—Йалавин хутошĕствăллă литтераттурăра сотершанипе формăна пађах уйрăм йапаласем туса хурать, тепри—Йалавин литтераттурă ыйтăвĕсене пурнăçри ытти условисене çыхăнтармасăр татса парать. Пуçлăпăр йулашки йăнăшĕнђен.

Йалавин ђăваш литтераттурĕне те, ђăваш поеђĕсене те «ни вăхăта ни вырăна» аса илмесĕр илсе пăхать.

Солăттăв М. Алентей спорнĕкĕ çинђен: çак сăвăсем ђăваш ĕççынни хушшинђи хунавланакан çамрăксемшĕн усăллă пулмалла, тенĕ. Алентей те Ваçанккан спорнĕкĕ

# НАУККĂ ПАЙĔ

## Кĕске хумпа ĕçлекен ратио çинţен.

Епĕр кĕске йе вăрăм ратиохумĕсем текен сăмахсене ţас ţасах илтетпĕр. Хам статйара епĕ ратиохумĕсен вăрăмăшĕ мĕне пĕлтернине ăнлантарса пама тăрăшăп, кайран ратиохумĕсем мĕнле сарăлнине каласа кăтартăп.

Пĕр пĕр пралук тăрăх електритсă пĕрмайах пĕр майлă пырат̆ пулсан çав електритсăна *пĕрмай* електритсă йухăмĕ теççĕ (вырăсла постоянный ток). Електритсăна пралук тăрăх пĕрре пĕр май, унтан хирĕç, тепĕр май йарса тăрсан вара *улăшуллă йухăм* (переменный ток) пулат̆. Крафик тусан вăл акă çапла пулат̆:




Çакăнта сăмахран каласан пĕр çеккунтă хушшинţе електритсă калле-маллеултă хут хумханса илет. Електритсă пĕр йенелле пынă ţух *А*-ран (йе нуţран) пуçланса вăйланса çитсе, каллех нуле çитет те, вара тепĕр йеннелле те нуţрен пуçланса вăйланса пырат̆, унтан каллех иксĕлсе нуле çитет, крафик çинţе *А* тоţкăран пуçланса *П* тоţкă патне çитет. Електритсăна çапла хумханса илме кирлĕ вăхăта *периот* теççĕ. *К* тоţкăпа *В* тоţкăсен хушшине амплиттитă теççĕ.

Електритсăна пĕр çеккунтăрах çавăн пек темиçе хут та калле-малле çÿрет теме пулат̆. Ратио тăрăх хыпарсем йамашкăн електритсă пĕр çеккунтăра 10.000 хут ытларах калле-малле çавăрăнса електритсă хумĕ тумалла.

Пĕтĕм ратиоперетатţĕксем те пĕр йышши хумсемпе ĕçлемелле пулсан епĕр пурне те пĕр вăхăтра илтмелле, çавăнпа хамăра кирлĕ стантсире хыпар çикналсене илтейес çук. Çавăн пек пăтранса пĕтесрен стансисем Кашнийĕ електритсă хумĕсене пĕр пек тумаççĕ: хăшĕ çекунтра питĕ нумай хут електритсă хумĕ кăлараççĕ, хăшĕ сахалрах, сайрарах. Перетатţĕк хумне пĕлмешкĕн пирĕн икĕ йапала пĕлмелле: 1) електритсă хумĕ пĕр çеккунтра мĕн ţухлĕ кайнине—ку паллă йапала: електритсă çекунтăра хутте хăçан та 300.000 километр кайат̆. 2) Електритсă пĕр çекунтра миçе хут каллĕ малле çавăрăнат̆. Сăмахран çекунтăра електритсă 200.000 хут калле малле çавăрăнса илет, вара електритсă хумĕн вăрăмăшне пĕлме 300.000-не икçĕр пин çине валеçмелле, вăл 1,5 километр 1500 метр пулат̆, çапла хумпа 1 сăмахран, Коминтернă стантси ĕçлет (1450 метр).



С. Антрейĕв сăнĕпе унăн ратио-перетатţĕкĕ.

Çапла ратиохумĕн вăрăмăшĕ тесе вăл пĕр периот вăхăтĕнţе миçе метр кайнине калаççĕ ĕнтĕ.

Çакна каланă хыççăн електритсă калле малле хăвăртрах çавăрăннăçемĕн ратиохумĕсен вăрăмăшĕ кĕскелсе пынине ăнланса илме пулат̆. Кăна примерпа ăнлантарăпăр. Калăпăр електритсă çекунтăра 20.000.000 хут калле-малле çавăрнса илсен—300.000.000 метра 20 мĕлйун çине валеçсен, вара пĕр хумăн вăрăмĕшĕ 15 метр пулат̆.

Çĕр метртан пуçласа вăрăмрах хумсене

---

### Ротçен Н.

**Йалавин** йулташ «пирĕн литтературă çамрăк, вăл тин ураланӑт», тенине йышăнат̆ пулсан, хăйĕн «Литтературăллă саметкăсем» статйинţе хăш-пĕр тĕлте, „вулакансене килĕшмен вырăнсем" лапләттарса хума хăйаймĕţţĕ.

Вăл, хăйĕн статйинţе, ţăваш литтературĕ аталапма тытăннă вăхăтри ţăваш çамрăк поеţĕсен 5 спорнĕкне тĕрĕслеме тăрăшат̆. Пĕр-пĕр спорнĕкне пăрахăçласа хурса, хăй йенţен: «вĕсенţе хаţ шăтса тухакан çамрăк хупавсене усă памалли пит нумайах мар», тесе хурат̆.

Çăмăр хыççăн, хĕвел пăхса, кăткăсем мешĕлтетме тытăннă пек, Октăпĕр хыççăн аталанма тытăннă ţăваш литтературĕ сапа тăрукках илемлĕ, пур йенţен те хисеплĕ происветенисем шур хут çине сарса пама пултараймĕ. Малтан хаţ тар йухтарас пулат̆, тар шывне тутанса пăхсан та нимĕнех те мар пулĕ.

«Сăвăсенţе рифмисем те килĕшÿллĕ пулмасан, ритми те палăрмасан тата опрăссем те йурăхлă пулмасан, хăш йенţен сăвă тесе калама пулат̆ха?», тени—тĕрĕс сăмах; анţах спорнĕксенţи пур сăвăсем те çавнашкалахши?!. Çук пуţ!

**Ваçанккан** «Хастарлăх» спорнĕкĕнţи хăш-пĕр сăввисенне «рифмă тавраш йĕрсе шырасан та тупас çук», тетĕн. Йурат̆. Анţах, епĕ сăнпа килĕшсех каймастăп вара. **Ретаксирен:** Асăрхаттарни—«сăввисене шатах аслă шкула кайинţен çырнă, 24-мĕш çултах пиţсте панă». тени мĕнши вăл?!. Ваçанкка ун ţух сăвă йĕркисене тин вĕренсе пымаст̆ши?!.

Йалавин йулташ, есĕ Ваçанккан «Хастарлăх» спорнĕкне вырăс сăвви-йуррисене куçарса кĕртнĕшĕн те пăрахăçлама хăйатăп пулсан—вăл, хаţ ţăваш çамрăкĕсем хушшинţе шăранакан, хăш-пĕр йурă-сăвăсене пăрахăçласа хунийех пулмаст̆ши?!. Апла есĕ, Йалавин, йăнăшатăп... Епĕр хаţ, çамрăксем, йалсенţе Ваçанкка куçарса, йе хăй çырса панă йурă-сăвăсене шăрантаратпăр çех! Питĕ килĕшÿллĕ, ţупа çĕклентерекен йурăсем. Есĕ, Йалавин, пирĕн йалсене килсех çÿрессĕн мар пуţ çав! Хуларах пурăнса, ăçтан йалти йурăсене уççăнах илтĕпĕрха!

Ваçанкка аслă шкула кайса килнĕ хыççăн, ţăваш çамрăк поеţĕсене, çамрăк хупавсене çĕнĕ формăсемпе пуйанлатрĕ, тесе калас килет манăн. Ваçанкка формисемпе усă курмастпăр, унтан вĕренместпĕр, тесе, нихăш çамрăк поет та калама пултараймаст̆.

Тĕплĕн тĕрĕслемесĕр, шухăшламасăр статйасем çырса пăрахни усăсăр йапала, Йалавин йулташ Некрассăв сăввисене Сурикковăн туса хуни те питех килĕшмест мана.

«Литтературăллă саметкăсем» йатлă Йалавинăн статйи, ман шухăшпа ытла усăллă статйах мар. Тĕлĕ-тĕлĕпе пăртак кирлĕ вырăнсем те пур. Çук, тесе калас мар!

вăрăм ратиохумсем, теҫҫĕ. Ҫĕр метртан кĕскерех хумсене кĕске ратиохумсем теҫҫĕ. Икĕ тĕслĕ хум та ҫекунтăра 300.000 километр кайат̆, анţах кашнийĕ хăш тĕлтен ытти йышши хумран уйрăмрах тăрат̆.

Вăрăм хумсем сăрт, вăрман ҫуртсем йĕри тавра ҫавăрăнса ҫаплах малалла кайаҫҫĕ. Кĕске хумсем урăх тĕрлĕ кайаҫҫĕ. Пĕр пайĕ вĕсен ҫул ҫинţи йапаласене ҫапăннипе урăх йеннелле кайаҫҫĕ; ытти пайĕ ҫўлелле, сывлăшри „хивисайт сийĕ“ текен тĕле ҫитсе, унтан каллех ҫĕр ҫинелле айалалла кайаҫҫĕ.




2-мĕш ўкерţĕк ҫинţе вăрăм хумсем ҫул ҫинţе тĕл пулнă йапаласемшĕн ţарăнса тăманни курăнат̆, ҫавăнпа ҫикналсем *А* стантсинţе те *К* стантсинţе те лайăх илтĕнеҫҫĕ. *В* стантси кĕске хумсемпе ĕҫлет пулсан, епĕр тĕлĕнмелле йапала куратпăр: ҫикналсем *А* стантсинţе илтĕнеймеҫҫĕ. *К* стантсинţе вăл *А* стантсăран ţылай инҫерех пулсан та, ҫикналсем питĕ лайăх илтĕнеҫҫĕ. Ратиотехникка пуҫланса кайнă вăхăтра кĕске хумсене пăрахăҫа кăларнă, вăл хумсемпе ĕҫлемен, вăрăм хумсемпе анţах ĕҫленĕ.

Кĕске хумсемпе малтан ратиойуратакансем анţах ĕҫленĕ, малтан хĕвеланăҫри ҫынсем, кайран пирĕн Совет Респуплĕкĕнţе те ĕҫлеме пуҫланă. Ратио йуратакансем кĕске хумпа ĕҫлесе тунинţен питĕ тĕлĕнмелле. Йевроппăпа Амерĕк хушшинţе ҫикналсем йарса тăмашкăн вăрăм хумсемпе ĕҫленĕ ţух 500 киловатлă перетатţăк кирлĕ. Кĕске хумпа ĕҫлес пулсан 5—6 ватт анţах кирлĕ (пĕр киловатра 1000 ватт), ҫапла кĕске хумлă перетатţăкпа ĕҫлеме 100.000 хут електритсăвăйĕ сахалрах кирлĕ.

Ҫак „хивисайтсийĕ“ хăй тăрăх кĕске ратиохумсене лайăх йухтарнинţен. ҫўреме ţарманнинţен килет.

**С. Антрейĕв.**

Вырăсларан **Ф. Куҫмин** куҫарнă.

# Х У Л А.

**(Ţăваш сăвви футтурисла ҫырăнни-ҫырăнманнине тата сăвăланан вирйал ţĕлхине сăнас майпа пиţетлетпĕр).**

Йалта—
авван хулла[1]).
кунта—
хытарт хула,[2])
кунта—
йал мар—хула.
Хутран хута
хутлан
Пулан ху та—
„Вутлан“!..
Хулан
сăн-пит ула.
...Сулатăн пит
алла...
...Йухан шыва йухма
Йепле ţаран,
Ухмах?!
Таптанакан асфаţт
Йурлат̆, итле:
пас... аţт...
Урам—
йухан шупак,[3])
Ик йеннипе
купа—
Ţул ҫурт купи.
Пур ҫурт—
Ҫап ҫут.

Пур ҫурт—
Улт хут.
Пур ҫурт
ларат̆ ту пак[4])
Пур ҫурт
кăларат̆ трупа...
Хулан
ҫилхи хушка:
Айал—
ţулпа
кранит,
Шăмми-шакки
хурҫран,
Ҫийĕ—
тимĕр ани.
...Сăвăҫ ţĕлхи
хушка,
Хулан ţунне
уҫма!
Ех!..
«Сомах ҫонатти
Омра ҫонат̆-и»?! . . . . .
. . . . . . . . . . . . . . . .
Пĕлте тренен
трупа,
—савут трупи
Хыҫат̆ пĕлт ҫийĕне
Хура тĕтĕмпе,
Ҫўлле
тек туртăнат̆
хвеţ туртăмпе.

Хула
кашлат̆
шавпа,
Хула
ташлат̆
хумпа,
ĕҫ хумĕпе.
Хулан ţĕри—
савут,
савут—
хулан мими.
Хутланţĕрри ҫĕр хут,
ҫĕр хут
хулан ҫемми.
Хулан хăват—
макнит,
туртат хăй ҫаврăмне.
Хула хăват̆
кранит
тĕпţе умне.

* * *

Йалта
авван хулла,
кунта—
хытарт хула,
кунта йал мар
—хула!

**Антрей Петтокки.**

[1]) Хулă аватăн, тени.
[2]) Шăмшакна ҫирĕплет.
[3]) Шупак—шыв пек.
[4]) Ҫулĕ ту [сăрт] пек.



Аккатемёк НИККОЛАЙ ЙАККӐВЛЁВИЂ МАРР.

# Аккатемĕк Никколай Йаккăвлĕвиҁ МАРР.

Марр аккатемĕк вĕренӳллĕх ĕҫне тума тытăнни кăҫал 40 ҫул тултарат̆. Унăн ҫав 40 ҫул хушшинҁи ĕҫĕсенҁен пĕри — вăл ҁĕлхе ҫинҁен ҫĕнĕ теори — йафеттит теорине пуҫласа йарса, ăна ҫирĕплетсе пыни. Йафеттит теорийĕ вăл револҁутсилле теори. Ку теори револҁутсиллĕ классемпе пусмăрта пурăннă халăхсемшĕн пит паха теори. Ҫак теори халҁхи ҁĕлхесем авалхи ҁĕлхесенҁен йепле ӳссе пынине, авалхи ҁĕлхесем хăйсем йепле пуҫланса кайнине вĕрентекен теори. Йафеттит теори вĕрентнĕ тăрăх, ҁĕлхе пуҫланса ӳссе пыни етем хуҫалăхĕнҁен, хуҫалăх хатĕрĕсенҁен, халăхсем пĕр пĕринпе хутшăнса пурăннинҁен килет.

Марр аккатемĕк тĕнҁери паллă вĕренӳҫĕсем хушшинҁе ҁи палли. Вăл тата Вĕренӳллĕх Аккатеминҁи Ҁăваш Комиҫҫин пуҫлăхĕ. Ҁăваш ҁĕлхине сăнаса вĕренес ĕҫе ҫĕнĕ ҫул ҫине кăларнă вĕренӳҫĕ.

Ҁăваш ҁĕлхине вĕренме Марр ҁăвашсем патне виҫĕ хут килҁĕ. Марр каланă тăрăх ҁăваш ҁĕлхи пит авал пуҫланса кайнă ҁĕлхе. Вăл ҫакăнта (сылтăмра) кĕртнĕ, Марр хăй тунă ҫхемăран аван палăрса тăрат̆.

Йафеттит теорин хăйĕн меттăҁĕ пур. Ҫав меттăт ҁăваш ҁĕлхин халҁхи сăмахĕсене, краматтĕкне ăнланма пит пулăшат̆.

Н. Й. Марр ҁĕлхеҫĕ кăна мар, вăл йапаласен тĕрлĕ ĕҫ хатĕрĕсен историне тата ытти вĕренӳлĕхсене те пит хăватлă пĕлет.

Марр тата вĕренӳҫĕ кăна мар, вăл пысăк ĕҫлĕ вырăнсенҁе те тăрат̆. Вăл ҁăвашсемшĕн те ĕҫлет. Ун патĕнҁе виҫĕ ҁăваш тĕрлĕ вĕренӳлĕхе вĕренсе пурăнҁĕҫ. Вăл тăрăшнипе Вĕренӳлĕх Аккатеминҁен йулашки ҫулсенҁе Ҁăваш респуплĕкĕнҁи етеме, ҫĕршыва, ӳсентăрана вĕренес тĕлĕшпе пирĕн патра темиҫе екҫпетитси




**Ҫак ҫхемӑ ҫӑваш ҫӗлхи ытти халӑх ҫӗлхисем хушшинҫе мӗнле вырӑн йышӑннине кӑтартать.**

---

пулҫӗ, халӗ те пулса пыраҫҫӗ. Вӑл тӑрӑшнипе ҫӑваш ӗҫхалӑхӗн кӗнеке килне (пиплиоттӗкне) тӑвас ӗҫ те майланса пырать. Маррӑн ҫӑваш ӗҫҫыннишӗн тунӑ ӗҫӗсене шута илсе Ҫӑваш респуплӗкӗн Канашӗсен Аслӑ Пуххи ӑна хӑйӗн хисеплӗ ҫленне суйларӗ.

**Тимухха Х., Солӑпӑв М.**



Ларaççĕ—Тимухха Хĕветĕрĕ, Н. Й. Марр, Матви Тимахви; тăраççĕ—Салăттăв Микули, вăйĕах вĕрен̆ӳçи Паушшĕв.

# Ҫёмёрлёри компинат — Ђăваш респуплёк интустрийён пирвайхи никёсё.

## Ҫёмёрлёри компинат.



Ђăваш респуплёкне хапрăк-савăтсем кирлё. Ђăваш респуплёкне те интустрилесе, Комуниссен парттин XV-мёш сиесё каласа хăварнисене пурнăҫа кёртмелле.

Ђăваш респуплёк промышлёнăҫё ђи малтан хамăрăн вăрман пуйăнлăхё ҫинђе тытăнса тăмалла.

Промышлёнăҫ вађђи пирён вăрман йураллă тата ытла сахалах та мар.

Халё епёр Ҫёмёрлё стантси патёнђе йăвăҫран тёрлё таварсем ёҫлесе кăларакан компинат тăвас шухăш тытрăмăр. Ҫак ыйтăва Халăх Комиссарёсен Канашёнђе пур йенђен те тёплён пăхса тухнă. РФССР Халăх Хуҫалăхён Аслă Канашё пирён шухăшпа килёшнё.

Унтан, ҫинђех, пирён Ђăваш респуплёкне йуман вăрманлăхне сăнама комиҫҫи йađёҫ. Комиҫҫине Майёр, Пођански професҫăрсем, т. ыт. кёнё.

Комиҫҫи хамăр респуплёкри ёҫлекенсемпе пёрле „Йетинствă“ фапрăкне, тата ытти вăрман ёҫёсене туса тăракан савăтсене те сăнаса тухрё. Пуман йăвăҫёнђен миҫе % таран тавар тухма пултарнисем палăрђёҫ. Ку Компината пирён патăрта туса лартма кирли курăнђё.



Ҫак комиҫҫи сăнаса тухнă маттериалсене Мускаври уђрештенисенђе йышăнса, компинат тăвассипе килёшнё, укҫа та памалла тунă.

Ку компинатра хăма савăђё, сётел-пукан, фанер, тёрлё йăвăҫҫу (древ. спирт), т. ыт. тумалли савăтсем пулаҫҫё.

---

Малтанхи уќерђёкре — Мускавран килнё комиҫҫи компинат пулас вырăнсем ҫинђен пўлёмре Ђăваш респуплёк планё ҫине пăхса, ўтсе йавнине кăтартнă.

Иккёмёшёнђе — комиҫҫи Ҫёмёрлёре йуман кёрешсене пăхса пахаласа ҫўрени.

---

## Шыв айёнђи вулккан.

Ҫёр ҫинђи пеќех шыв айёнђе те ђас-ђасах ҫёр ђётресе питё вăйлă вулккансем пулкалаҫҫё. Ҫак кунсенђе Инти оккеан шывё тёпёнђе пёр вулккан сиксе тухнă. Вулккан хыпса тухнă ђух пăспа тёрлёрен касăксем ҫав тери пысăк вăйпа шывран 250 метрăр ҫўлелле персе тухнă.

## Ҫёр ҫинђе пурнакан халăх.

Ҫёр ҫинђе пурнакан халăхăн шуђё ҫулран ҫул ҫав тери нумай ўссе пырат̌. Пётём тёнђери статтистёк пўровё (Колланти хулинђе—Каакăра) халăх шуђё ҫинђен ҫак кунсенђе ҫёнё ҫветенисем пиђетлесе кăларнă.

1910-мёш ҫулта ҫёр ҫинђи халăхăн шуђё 1 мёлйарт та 600 мёлйун ҫын шутланнă. Йулашки 15 ҫул хушшинђе вăл шут ҫумне тата 400 мёлйун ҫын хутшăннă. Ҫапла ёнтё ҫёр ҫинђи халăхăн шуђё 2 мёлйарта ҫитнё тесе шутлама пулат̌.

Пуринђен ытларах халăх Америкăре ўснё. Йулашки 20 ҫул хушшинђе Америк халăхён ўсёмё 26,5 %-та ҫитет. Ку ўсём ҫак хушăра Йевроппăран Америке халăх нумай куҫнинђен килнё.

Йевроппăри халăхсен шуђё йулашки 20 ҫул хушшинђе 3% ўснё.

## СССР-нђи ђукунҫул тăвас ёҫ.

Совет Сойусён халђи территорийё ҫинђи ђукунҫулсен тăршшё вăрҫăђђенхи ҫулсенђе 54800 ҫухрăма ҫитнё. Пёлтёрхи ҫул вăл шут 75 пин ҫухрăма ҫитнё. Ҫапла ёнтё ђукунҫулсен тăршшё, вăрҫăђђенхипе танаштарса пăхсан, 20 пин ҫухрăм ытларах хутшăннă.

Совет влаҫё пурăннă вăхăтра тёрлё ҫёрсенђе темён ђухлех ҫёнёрен ђукунҫулсем тунă. Вăл ҫулсене туни халăх пурлăхне хăпартас йенђен те ҫыхăну ёҫшён те питё хаклă. Ҫёнё ђукунҫулсенђен ҫаксене кăтартма йурат̌: Ҫёпёрте—Ађђин—Минуҫҫинск (460 ҫухрăм тăршшё), Волђукин — Куҫнетск (220 ҫухрăм), Ђулхула — Коттелниђ (270 ҫухрăм тăршшё). Халё Туркестанпа — Ҫёпёр хушшинђе пысăк ђукунҫул тăваҫҫё. Тата та ёҫ хёрсех пырат̌.

## Хăрăмпа усă курни.

Хăрăмăн та усси пур. Картана ҫимёҫ лартас умён хăрăм, кёл, тăвар хутăштарса йăран ҫине сапаламалла (9 пайё хăрăм, 7—кёл, 1 пай тăвар пулсан аван). Кун пек туни ҫимёҫе тёрлё хуртсенђен, кайăк-кёшёкрен хўтёлет тата лайăх ўсме пулăшат̌. Кăмака хăрăмё купăста, шёкёнтёр т. ыт. ваđђи, тата ҫарансене ҫёнетме йатнех.

Шурналсенђен И. Т-ш.

